Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ИЙУЛЬ 9 ШАМАТКУН 156 (4969) №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

21-мӗш ҫул тухать

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӑн хаҫачӗ

Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Ҫулйӗр строительстви ӗҫӗ кайа йулса пынине пӗтермеле

Пирӗн орденлӑ Чӑваш республикӗ ҫулйӗр строительстви йенӗпе чылай ҫулсем хушши пӗтӗм Совет Союзӗпе малта пыракан республика пулнӑ. Республикре йулашки ҫулсем хушшинче лайӑхлатнӑ ҫулсем 3.334 километр тӑршшӗ тунӑ. Халӑх хуҫалӑхӗн 1938 ҫулхи планӗ ҫулйӗр строительствине 10.107,3 пин тенкӗ укҫа хывма пӑхать. Ҫак укҫа-тенкӗпе ҫӗнӗрен ҫулсем, кӗперсем тумала, малтан тунӑ ҫулсене, кӗперсене йусамала.

Анчах ҫулйӗр ӗҫӗ кайа йулса пырать. Республика 1937 ҫулхи ҫулйӗр строительстви планне ӑнӑҫлӑн тултарман. Кӑҫал та ҫулйӗр ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе мӗн чухлӗ те пулин палӑрмалӑх ӗҫсем тӑвайман, малтанхи ҫурҫул планне ҫӗнӗрен ҫулйӗр тавассипе 23,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑмӑнах чул кӗперсем тӑвасси, ҫулсем ҫине гравий сарасси хытӑ йулса пырать. Ҫулйӗрсене йусас, тирпейлӗн пӑхса усрас тӗлӗшпе те ӗҫе тивӗҫлипе организацилемен. Ҫавна пула лайӑх пахалӑхлӑ ҫулсемех йапӑхланма пуҫланӑ. Ҫулйӗрсен халӑхи вӑхӑтри пахалӑхӗ автотранспӑртпа туллин уҫӑ курассине хӑрушлӑх умне тӑратать, тырпулсене пуҫтарса кӗртес ӗҫе чӑрмавсем кӳме пултарать.

Ҫулйӗрсем уйрӑмӑнах Йӗпреҫ, Ишлей, Патӑрйел районӗсенче йапӑх. Йӗпреҫ районӗ ҫурҫул планне 3,6 проц., Ишлей—4,9 процент, Патӑрйел—3,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Вӑл районсенче ҫулсене йусас тӗлӗшпе пайана ҫитсе те тивӗҫлипе ӗҫлеме тытӑнман. Ытти районсенче те ӗҫсем лайӑхах мар. Плана тултарнӑ район республикӗпе те ҫук. Йетӗрне районӗ ку тарана ҫитсе те мостовойсем тума тытӑнман. Райӗҫтӑвком ӗҫ хӑрушлӑх умӗнче тӑнипе килешет.

Трак районӗнче чылай колхозсенче ҫулйӗр бригадисем организациленӗ. Районти ҫулйӗр пайӗ колхозсемпе ҫыхӑнса ӗҫлемест. Унта ӗҫлекен работниксем вырӑнсене те тухса ҫӳремеҫҫӗ. Ҫулйӗр бригадисем хушшинче массӑлӑ ӑнлантару ӗҫӗ ҫителӗксӗр, вӗсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑрту пуҫарман. Ҫавсене пула ҫулйӗр планне тултарасси тӳсме ҫук йулса пырать. Мостовойсем тӑвас плана пӗтӗмпӗ те 13 процент ҫеҫ тултарнӑ. Апла пулин те райӗҫтӑвком ҫулйӗр строительстви ӗҫне хӑйӗн аллине илме шутламасть. Кунашкал фактсем пӗр Трак районӗнче ҫеҫ мар, Ҫӗрпӳ, Вӑрнар, Елӗк, Шупашкар районӗсенче те пур.

Ҫулйӗр строительствинче социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стахановла йухӑма сарса пырас тӗлӗшпе ҫулйӗр пайӗсем те, райӗҫтӑвкомсем те, ҫавнашкалах ҫулйӗр управлени те начар ӗҫлеҫҫӗ. Социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва 6 район ҫеҫ хутшӑннӑ. Вӗсем те хӑйсен ӑмӑрту договӑрӗсене тӗрӗслесе пымаҫҫӗ. Колхозсемпе йалсоветсем тата бригадӑсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑрту тата та йеррипен сарӑлса пырать.

Райӗҫтӑвкомсем ҫулйӗр ӗҫне манӑҫа хӑварнине кура йалсоветсем те вӑл ӗҫ ҫине ӳрӗк-сӳрӗк пӑхма тытӑннӑ. Вӑрнар районӗнчи Кӗҫӗн Кипекпе Нурӑс тата Туҫи Мӑратпа Ҫавалкас йалӗҫем хушшинчи ҫулсем йапӑхса кайнӑ. Анчах ку ҫулсем ҫине никам та ҫавӑрӑнса пӑхмасть. Йалсоветсем хӑйсен тивӗҫлӗхне маннӑ: ӗҫе организациleme мар, ҫулйӗр бригадисен ӗҫӗсене те тӗрӗслемеҫҫӗ.

Ҫулйӗр организацисенче пулнӑ халӑх тӑшманӗсем ҫулйӗр строительствине пур майсемпе те чӑрмантарма, йапӑхтарма тӑрӑшнӑ. Вӗсем сирӗп йӗркелӗхе пӑснӑ, ӗҫ дисциплинине, ответлӑха сӳрӗклетнӗ. Халӑх тӑшманӗсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хыҫҫӑн ҫулйӗр организацисемпе совет организацисен ҫине тӑрсах сӑтӑрлӑх йулашкийӗсене хӑвӑрттӑн пӗтерессишӗн кӗрешмеле. Ҫакӑн пек кӗрешни ҫук-ха пайанхи куна ҫулйӗр организацисен ӗҫӗнче.

Халӑх хуҫалӑхӗн 1938 ҫулти планӗ тӑрӑх ҫулйӗр строительстви ӗҫӗсене правительтвӑ комиҫҫийӗ октабӗрӗн 1-мӗшӗнче йышӑнмала. Вӑхӑт нумай йулмарӗ. Вӑхӑта вӑраха йамасӑр ҫулйӗр строительствине малти вырӑна кӑлармала тӑвас пулать. Районсемпе йалсоветсен, колхозсен тата ҫулйӗр органӗсен плана хӑвӑрттӑн тултарассишӗн социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн пуҫарса йамала. Пирӗн танлашса ӗҫлемелли примерсем пур. Ака Тутаркас районӗнчи Жданӑв йачӗпе тӑракан колхозри Архангельский йулташ йертсе пыракан бригадӑ кӑҫалхи плана ийунӗн 17-мӗшченех тултарнӑ. Кунашкал лайӑх опытсем ытти районсенче те сахал мар. Вӗсен ӗҫ опычӗсене анлӑн сармала. Кашни колхозри ҫулйӗр бригадине стахановла ӗҫлекен тумала.

Ӗҫен ӑнӑҫлӑхне тата пахалӑхне ҫынсем татса параҫҫӗ. Халех колхозсенчи ҫулйӗр бригадисене тата йединоличниксене ҫулйӗр строительствине массӑлӑн организацилемеле, вӗсене куллен пулӑшса вӗрентсе пымала. Ҫулйӗр строительствинчи инженерсемпе техниксен пур ӗҫсене те пысӑк пахалӑхпа пурнӑҫа кӗртме пулӑшмала. Кашни колхоз, йалсовет, район хӑйӗн планне кӗске срукрах тултармала тӑвас пулать.

Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне илме ҫырӑнасси пӗтӗм совет ҫӗршывӗнче хӑватлӑн сарӑлса пырать

Чӑваш АСС Республикӗнчи ӗҫҫыннисем, займа ҫырӑнмасӑр пӗри те ан йулӑр!

Колхозниксем рабочисенчен йулмаҫҫӗ

Пирӗн республикӑри пӗтӗм ӗҫхалӑхӗ займа пысӑк хастарлӑхпа ҫырӑнать. Рабочисемпе служӑщисем, инженерлӑ-техниклӑ работниксем ку йенӗпе малта пыраҫҫӗ. Шупашкар, Улатӑр, Канаш хулисенче ҫӗнӗ займа иртнӗ ҫулхинчен („ССР Союзӗн Оборонине тӗреклетмелли займ") иртерсе ҫырӑнни ҫавна пӗлтерет те ӗнтӗ. Колхозниксем правительтвӑ займ ҫинчен йышӑннӑ решенине пӗтӗм кӑмӑлтан кӗтсе илнӗ. Колхозниксем ҫак хисеплӗ ӗҫре рабочисенчен йулмаҫҫӗ. Халӗ займа пурте пӗр хавассӑн ҫырӑннипе тӑван ҫӗршыва чӗререн йуратнине кӑтартса параҫҫӗ.

Йелчӗк районӗнчи чылай колхозсенче ҫӗнӗ займа ҫырӑнасси тата займшӑн укҫа пухасси лайӑх пырать. „Знамя" колхозри допризывник Гаврил Оҫипӑв йулташ займа 50 тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине те ҫавӑнтах тӳлесе татнӑ. Вӑл колхозниксен пухӑвӗнче пӗтӗм колхозниксемпе ӗҫҫынни йединоличниксене займа ҫырӑнма чӗнсе ҫапла каланӑ:

— Епӗ кӑҫал Хӗрлӗ Ҫара кайатӑп. Пирӗн Хӗрлӗ Ҫар вӑйлӑ, вӑл никам ҫӗнтерейми вӑйлӑ техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ. Мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫара кайма епӗ хавасланса хатӗрленетӗп. Займа 50 тенкӗлӗх ҫырӑнатӑп, укҫине те халех тӳлетӗп. Епӗ перекетленӗ укҫа йуратнӑ ҫӗршывӑн оборонине ҫирӗплетме, ҫӗршыва татах та вӑйлӑлатма кайать!

Ҫавӑн пекех Патрекелӗнчи „Осоавиахим" колхоз членӗ П. Д. Муратӑв та займ илме ҫырӑнса 50 тенкӗ укҫа тӳленӗ.

Ҫӗнӗ Хӑвара—ЧАССР Верховнӑй Совет депутачӗ, йалсовет председателӗ Ҫмирнова йулташ йертсе пыракан йалсоветра пур колхозниксем те займ ҫырӑннӑ. Ку йалсоветра 4.205 тенкӗлӗх (иртнӗ ҫулхи займран 365 тенкӗ ытларах) ҫырӑннӑ, ҫак шутран 900 тенкӗ укҫа пухса перекет кассине пырса хывнӑ.

Майорӑв.

Ҫӗнӗ займ укҫине тӳлеҫҫӗ

ТӐВАЙ. Ҫӗнӗ займ Тӑвай йалсоветӗнче ӑнӑҫлӑн сарӑлать. Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем 2.250 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ҫӗнӗ займшӑн укҫине те ҫавӑнтах пухса параҫҫӗ. Ийулӗн 4-мӗш тӗлне колхозниксем ҫӗнӗ займшӑн укҫа 1.305 тенкӗ парса татнӑ.

„МОПР" колхоз колхозникӗсем ҫӗнӗ займа 850 тенкӗлӗх ҫырӑнса, займшӑн 685 тенкӗ укҫа панӑ. Колхозниксемпе пӗрле йединоличниксем те ҫӗнӗ займшӗн укҫа тӳлеҫҫӗ. Вӗсем займа 1.075 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине 410 тенкӗ тӳленӗ.

Платонӑв.

2 пин тенкӗ пухнӑ

ЙЕЛЧӖК. Мӑн Тайапа йалсоветне кӗрекен колхозсенчи колхозниксем ҫӗнӗ займ ҫырӑнса, укҫине те тӳлеҫҫӗ. Ийулӗн 4-мӗш тӗлне вӗсем ҫӗнӗ займ укҫине 2 пин тенкӗ панӑ.

Ҫак ҫитӗнӗве йалсовечӗ ӑнлантару ӗҫне анлӑн сарнипе тума пултарнӑ. Йалсовечӗ лайӑх агитаторсене уйӑрса агитбригада тунӑ. Вӑл бригадӑ колхозниксене ҫӗнӗ займ ҫинчен лайӑх ӑнлантарса парать. Йалсовет колхоз бригадисем ӗҫленӗ ҫӗре кайса ҫӳреме агитбригадӑ вальли йатарласа грузовик уйӑрса панӑ. Грузовике плакатсемпе, хӗрлӗ хӑмачсемпе илемлетнӗ.

Ку йалсоветра займ илме ҫырӑнма чи малтан йалсовет активӗ пуҫланӑ. Ҫӗнӗ займ кӑларасси ҫинчен постановлени тухсанах йалсовет йал активӗн канашлӑвне пухнӑ. Канашлӑва 25 активис пынӑ. Активиссем канашлурах 1.045 тенкӗлӗх займ ҫырӑнса, ҫӗнӗ займ ҫинчен ӑнлантарса пама колхоз бригадисене уйа, ҫум ҫумланӑ ҫӗре тухса кайнӑ.

Ҫапла ӗҫленине пула ку йалта займ сарасси тата займшӑн укҫа пухасси лайӑх пырать.

П—в.

Пысӑк хаваслӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑм) Займне районра ийулӗн 3-мӗшне 114 пин тенкӗлӗх сарнӑ. Ку шутран районри организацисенчи рабочисемпе служӑщисем 341 ҫын 66.640 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Займ сарас ӗҫпе йалсоветсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. 2 кун хушшинчех Атнар йалсоветӗнче 6.800 тенкӗлӗх, Паймаш йалсоветӗнче 3.905 тенкӗлӗх, Атикасси йалсоветӗнче 3.360 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Займ сарас ӗҫ кашни кунах вӑйланса пырать.

ҪӖМӖРЛЕ. Ийулӗн 3-мӗшне район центрӗнчи ӗҫҫыннисем хушшинче 93.025 тенкӗлӗх займ сарнӑ. Йӑвӑҫ каскалакан комбинатри рабочисемпе служӑщисем 165 пин тенкӗлӗх займ ҫырӑннӑ.

Колхозсенче те займ пысӑк ӑнӑҫлӑхпа сарӑлать. „Искра" колхозра—2.005 тенкӗлӗх, „Красноармеец" колхозра 3.190 тенкӗлӗх, „Лесной Огонек" колхозра 1.280 тенкӗлӗх сарнӑ.

ПӐРАЧКАВ. Ҫӗнӗ займа ӗҫҫыннисем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ҫырӑнаҫҫӗ. „Трудовик" колхоз колхозникӗсене ҫӗнӗ займ кӑларни ҫинчен ӑнлантарсан колхозник Иван Павлӑвич Хадин йулташ:

— Пирӗн займсем хамӑр пурнӑҫа аванлатма, ҫӗршыв оборонине ҫирӗплетме кайаҫҫӗ, епӗ ҫӗнӗ займа 100 тенкӗлӗх ҫырӑнатӑп, пур колхозниксене те ӑмӑртӑва чӗнетӗп, терӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑнах „Трудовик" колхоз колхозникӗсем ҫӗнӗ займа 4.500 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Социалисӑмла ӑмӑртса Анастаҫӗвӑри „Ударник" колхозра 4.600 тенкӗлӗх, Пикулина йалсоветӗнчи колхозсем 5.500 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Районӗпе ийулӗн 3-мӗшне колхозниксем хушшинче пурӗ 53 пин тенкӗлӗх, рабочисемпе служӑщисемпе пӗтӗмпе пӗрле шутласан 162 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Займ ҫырӑнасси халӗ те пырать.

КУСЛАВККА. Ийулӗн 4-мӗшне 10 сехет тӗлне районри рабочисемпе служӑщисем хушшинче ҫӗнӗ займа 128.475 тенкӗлӗх, колхозниксем хушшинче 19 пин тенкӗлӗх, йединоличниксем хушшинче 970 тенкӗлӗх сарнӑ.

Комбинатри рабочисем пурте ҫӗнӗ займ илме ҫырӑнаҫҫӗ. Ийулӗн 4-мӗшне 528 ҫын хушшинче 77.680 тенкӗлӗх займ сарнӑ. Ҫавнашкалах „Большевик" колхозра 115 ҫын—7.135 тенкӗлӗх, „Динамо" колхозра 83 ҫын 1.475 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ҫӗнӗ Куснар йалӗнчи колхозниксемпе йединоличниксем ҫӗнӗ займа ҫырӑнса укҫине те тӳлеме пуҫларӗҫ.

КАНАШ ХУЛИ. Канаш хулинче ҫӗнӗ займа 259.949 тенкӗлӗх сарнӑ. Килхуҫи хӗрарӑмсем хушшинче те займ ҫырӑнасси ӑнӑҫлӑ пырать.

ШУПАШКАРТИ макарон хапрӑкӗнчи рабочисем, ҫӗнӗ займ кӑларни ҫинчен сӳтсе-йавсан, ийулӗн 2-мӗшӗнче ирхине 2.760 тенкӗлӗх займ илме ҫырӑнчӗҫ.

Ҫавӑн пекех Чӑваш АССР Осоавиахим Тӗп Советӗнче ӗҫлекенсем те ҫӗнӗ займа пысӑк хаваслӑхпа ҫырӑнаҫҫӗ. Ийулӗн 2-мӗшӗнче 20 ҫын 8.190 тенкӗлӗх займ илме ҫырӑнчӗҫ. Уйӑхри ӗҫукҫипе шутласан вӑл 94 процент пулать.

Займ хроники

●● Шупашкарти суту-илӳ ӗҫӗнче ӗҫлекенсем ҫӗнӗ займа кашнийех пӗрер уйӑх ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑнаҫҫӗ. Ийулӗн 2-мӗшӗнче 2-мӗш номӗрлӗ магазинра ӗҫлекенсем—1.500 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ҫакӑн пекех займ илме ҫырӑнас ӗҫ 1, 3, 4, 5-мӗш магазинсемпе 1-мӗш номӗрлӗ столовӑйра ӗҫлекенсем хушшинче те аван пырать. Ийулӗн 2-мӗшӗнче Чебторгра ҫӗнӗ займ кӑларнӑ йатпа уйрӑм номӗр стена хаҫачӗ кӑларчӗҫ.

КАНАШ. Аптека склачӗпе аптекоуправлени уйрӑмӗнче ӗҫлекенсем Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне 9.600 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

Ф. Григорйӗв.

ШӐМАТ (Йетӗрне р., телефонпа). Йалсоветри колхозсене РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ райӗҫтӑвком председателӗ Малинин йулташ пырса ҫӗнӗ займ ҫинчен ӑнлантарса пачӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑнах колхозниксем ҫӗнӗ займа 5.080 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

Г. Ҫмирнов.

ЕЛӖК. Райҫӗрӗҫ пайӗнче ӗҫлекенсенчен ҫӗнӗ займа чи малтан Борисӑвпа Орлов йулташсем 500-шер тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Ытти работниксем те кашнийех пӗрер уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ займ ҫырӑнчӗҫ.

М. Филиппӑв.

ШУПАШКАР. Нагорнӑй урамӗнчи займ уполномоченнӑйӗ Польакова йулташ ийулӗн 5-мӗшӗнче килхуҫи хӗрарӑмсем хушшинче Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне 475 тенкӗлӗх сарнӑ. Ҫак урамрах килхуҫи хӗрарӑмӗ Йекатерина Журавльова йулташ ҫӗнӗ займа 50 тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине ҫав вӑхӑтрах тӳлесе татрӗ.

В. Васильӗв.

СЕНТЕРВӐРРИ. Хулари ӗҫҫыннисем ийулӗн 6-мӗшне ҫӗнӗ займа 263.390 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Вӑл шутран колхоз театрӗнче, прокуратурӑра, райҫӗрӗҫ пайӗнче, Вӑрман хуҫалӑхӗнче ӗҫлекенсем пӗр уйӑх ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑннӑ.

Пр. Сатур.

Хапӑл туса йышӑнчӗҫ

ВӐРНАР. Вӑрнар районӗнчи ӗҫҫыннисем Государствӑн Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх (пӗррӗмӗш ҫулхи кӑларӑм) Займӗ тухнине ырласа, хапӑл туса йышӑнчӗҫ. Йалсенче пур ҫӗрте те митингсемпе пухусем пулса иртрӗҫ.

Рабочисемпе служӑщисем, колхозниксем, йединоличниксем ҫӗнӗ займа хавасланса ҫырӑнаҫҫӗ.

Ийулӗн 3-мӗш тӗлне районра рабочисемпе служӑщисем хушшинче займ 122.000 тенкӗлӗх, колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче 42.270 тенкӗлӗх сарнӑ.

Кольцовка йалсовечӗ 12.765 тенкӗлӗх, Уравӑш йалсовечӗ 4.925 т., Ҫавалкас йалсовечӗ 4.690 т., Вӑрманкас йалсовечӗ 4.450 тенкӗлӗх сарнӑ.

Ан. Крислов.

Шупашкарта

* Шупашкарти пожарнӑй командӑра командирсемпе бойецсем 14.910 тенкӗлӗх займ илме ҫырӑнчӗҫ.

* Чӑваш АССР Йӳстици Халӑх Комиссариатӗнче, Чӑваш АССР Верховнӑй сутӗнче, прокуратурӑра тата Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариатӗнче ӗҫлекенсем, чӑваш педагогикӑ институтӗнчи преподавателӗсемпе студентсем, Шупашкарти „Пекарь" ертелӗнче ӗҫлекенсем кашнийех пӗрер уйӑх ӗҫ укҫи чухлӗ займ илме ҫырӑннӑ.

* Чӑвашпотребсойуз кантурӗнче ӗҫлекенсем 59 ҫын ҫӗнӗ займа 17.550 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

* Шупашкарти кино-хроникӑ студийӗнче ӗҫлекенсен пӗр уйӑхри ӗҫ укҫи фончӗ 4.800 тенкӗ; вӗсем ҫӗнӗ займа илме 4.925 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ.

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ чукунҫул ҫинчи обходчик Н. Е. Павлюк, сыхлӑхлӑ пулса, диверсанта тытнӑ,—ҫав диверсант пӗр йут ҫӗршыв разведкин заданийӗ тӑрӑх пойаса ҫӗмӗрме хатӗрленнӗ пулнӑ.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Н. Е. ПАВЛЮК йулташ. Е. Копыта фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото) „Пресклише".

Ҫӗнӗ займӑн калама ҫук пысӑк ҫитӗнӗвӗ

Ҫӗнӗ займа пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх халиччӗнхи пекех пысӑк ҫӗкленӳпе ҫырӑнаҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем хӑйсен перекетленӗ укҫа тенкине государствӑна кивҫен параҫҫӗ.

Займа пурте ҫырӑннӑ предприйатисемпе учрежденисем Мускавра халех ӗнтӗ ҫӗршерӗн шутланаҫҫӗ. „Ҫурлапа Мӑлатук" савӑтра пур рабочисемпе служӑщисем те ҫырӑннӑ. Сталин йачӗпе тӑракан автомобил савӑтӗнче те займ сарӑлса ҫитет. Унта 31.668 ҫын пурӗ 8 мӗлйун ҫурӑ тенкӗлӗх ытла ҫырӑннӑ. Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан тормӑзсем тӑвакан савӑтра займ чаплӑн сарӑлать. Ку савӑтра ӗҫлекен рабочисем, служӑщисем тата инженерлӑ-техниклӑ работниксем (пурӗ 2 500 ҫын) 549 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Ҫывӑх кунсенчех Мускаври хапрӑксем, савӑтсем тата учрежденисем пурте займа ҫырӑнса пӗтереҫҫӗ.

Харкӑв тӑрӑх займа 82.006 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Ку ӗнтӗ пӗлтӗрхинчен вунӑ мӗлйун тенке йахӑн ытларах ҫырӑннине пӗлтерет. Днепропетровщинӑра 145.781 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ, пӗлтӗрхинчен 8.150 пин тенкӗ ытларах. Облӑҫри колхозниксем займ укҫине 3 мӗлйун тенке йахӑн тӳлесе те татнӑ ӗнтӗ.

Ҫӗнӗ займа Бакура пысӑк ҫӗкленӳпе ҫырӑнаҫҫӗ. Ийулӗн 7-мӗшне 59 992 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Нефть хулинчи ӗҫҫыннисем пирвайхи пилӗк кун хушшинчех пӗлтӗр ҫырӑннӑ пӗтӗм суммӑран иртерсе йанӑ.

Свердловск облаҫӗнчи колхозниксем государствӑна 7.511 пин тенкӗ кивҫен панӑ. Нумайӗш колхозниксем укҫисене займ ҫырӑннӑ чухнех тӳлеҫҫӗ.


(ТАСС).

Франци хаҫачӗсем Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займӗ сарӑлни ҫинчен

ПАРИЖ, ийулӗн 6-мӗш. Кӑҫхи хаҫатсем, уйрӑмӑн илсен, „Тан" тата „Сесуар" хаҫатсем ССР Союзӗнче Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займӗ калама ҫук ӑнӑҫлӑн сарӑлни ҫинчен ҫыраҫҫӗ. Ҫырӑнма пуҫланӑ хыҫҫӑнхи малтанхи тӑватӑ кун хушшинче Ҫӗнӗ Займа Мускавра 494 мӗлйун тенкӗлӗх ҫырӑннӑ, урӑхла каласан, 1937 ҫулти икӗ уйӑх хушшинче сарӑлнинчен чылай ытларах сарӑлнӑ.

(ТАСС).

Герой ывӑлӗ



М. М. Бабушкин, мухтавлӑ летчикӑн Совет Союз Геройӗн М. С. Бабушкинӑн ывӑлӗ, ӗҫ вӑхӑтӗнче вилнӗ ашшӗ вырӑнне самолет штурвалӗ умне тӑма шут тытнӑ. Ҫамрӑк патриота Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн сывлӑшҫар вӑйӗсен начальникӗ А. Д. Локтионӑв йулташ йышӑннӑ. М. М. Бабушкин ҫар летчикӗсен шкулне илесси ҫинчен приказ панӑ та ӗнтӗ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

РСДР Партин иккӗмӗш съезӗ пулнӑранпа 35 ҫул ҫитнӗ йатпа сборник тухать

РСДР Партин II-мӗш съезӗ пулнӑранпа ийулӗн 30-мӗшӗнче 35 ҫул тулнӑ май, Маркс—Енгельс — Ленин институчӗ партин II-мӗш съезӗн танхӑрӗнчи материалсемпе документсен сборникне кӑларать.

Сборнике Ленин статйисемпе сӑмахӗсем, РСДР Партин Петроградри, Мускаври, Кавказри т. ыт. комитечӗсен отчочӗсем, резолюцийӗсем, воззванийӗсем тата чӗнсе каланисем, „Искра" тата „Брдзолы" („Кӗрешӳ") хаҫатсенчи статйисемпе заметкӑсем, II-мӗш съезра каланӑ хӑшпӗр сӑмахсем, съездӑн чи кирлӗ решенийӗсем т. ыт. те кӗнӗ.

Сборникре Сталин йулташӑн „Ленин—РКП организаторӗпе ҫулпуҫӗ" йатлӑ статйи тата Кремӗлри курсантсен каҫӗнче 1924 ҫулти йанварӗн 28-мӗшӗнче „Ленин ҫинчен" каланӑ сӑмах ҫыпӑкӗ пичетленет.

Йатарласах хатӗрленӗ пӗр уйрӑм — Кавказ лешйӗнчи большевикла организацисем ҫинчен калаҫа парать.

Сборнике политикӑлӑ литературӑн государствӑ издательстви кӑларать, пичетрен вӑл ийуль уйӑхӗн вӗҫнелле тухмала.

(ТАСС).

Армйан ССР Верховнӑй Совечӗн пӗррӗмӗш ҫессийӗ

ЙЕРЕВАН. Армйан СС Республикӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет Президиумӗ Армйан ССР Конституцийӗн 37-мӗш статйи тӑрӑх Армйан ССР Верховнӑй Совечӗн пӗррӗмӗш ҫессине 1938 ҫулхи ийулӗн 12-мӗшӗнче Йереван хулинче пухма йышӑннӑ.

(ТАСС).

Туркмен ССР Верховнӑй Совечӗн пӗррӗмӗш ҫессийӗ

АШХАБАД. Туркмен СС Республикӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет Президиумӗ Туркмен ССР Верховнӑй Совечӗн пӗррӗмӗш ҫессине 1938 ҫулхи ийулӗн 24-мӗшӗнче Ашхабад хулинче пухма йышӑннӑ.

(ТАСС).

Суворӑв ҫинчен пйесса

Ленинградри Пушкин йачӗпе тӑракан государствӑ драмӑ театрӗ И. Бахтерӗвпа А. Разумовскин „Полководец Суворов" йатлӑ ҫӗнӗ пйессине лартма йышӑннӑ. Пйессӑн пирвайхи картинисенче вырӑс ҫарӗсем Фридрих ҫарӗсене хирӗҫ ҫӗнтерӳлӗн кӗрешнине, вырӑс ҫарӗ Берлина туртса илнине кӑтартнӑ. Вӑл ҫарта пулнӑ унчукнехи ҫамрӑк Суворӑв. Малалла актӑрсем пилӗк, пысӑк полководецӑн сӑнарне, ӑна халӑх лайӑх пӗлсе тӑнине т. ыт. те кӑтартса параҫҫӗ. Йулашки сценӑсенче Суворӑва хӗсӗрленине, сылка йанине кӑтартса панӑ.

Украинӑра займ пысӑккӑн сарӑлать

КИЙӖВ. Ийулӗн 6-мӗшне Украинӑра Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне 893.966 пин тенкӗлӗх вырнаҫтарнӑ, ҫав хисепрен Молдави АССР тӑрӑх—8.696 пин тенкӗлӗх вырнаҫтарнӑ.

(ТАСС).

„Тырпула пухса кӗртес ӗҫе лайӑх организацилесси тата тырпула кӗске срукра пӗр тӑкаксӑр пуҫтарса кӗртесси—сталинла 7—8 мӗлйард пӑт тӗштырӑшӑн кӗрешес пысӑк задач пулса тӑрать“

(ССР Сойузӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ „1938 ҫулта тырпула пухса кӗртесси ҫинчен“ йышӑннӑ постановленирен).

Ҫӗнӗ тырра хума хатӗр тӑмала

Тырпулсене уйран пуҫтарса кӗрес вӑхӑт ҫывхарса ҫитрӗ. Вӑйлӑ тырпула вӑхӑтра, тӑккаламасӑр пуҫтарса илнисӗр пуҫне тата ӑна аван сыхласа усрамала. Ҫавӑнпа та, тырра лайӑх пӑхса усрас пулсан, ампарсемпе складсене малтанах хатӗрлесе хумала.

Чи малтанах ампарсемпе складсене ҫӳпсенчен, тусантан, кивӗ тырӑсенчен тасатмала, сӑвӑссем тата сийенлӗ ытти хурткӑпшанкӑсем урай хӑми хушшисенче, ҫуракӑсенче, кӗтесри ҫӳпсенче ытларах пурӑнаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ампарсен урайне тата пура хӑмисене илсе тасатмала, ун хыҫҫӑн урайне, пура хӑмисене, ҫтенасене вӗри шывпа ҫумала, ампар алӑкне уҫса уҫӑлтармала. Ампарсемпе складсене ҫуса тасатнӑ хыҫҫӑн, извӗҫпе краҫҫын йе каустически текен содӑпа дезинфекци тумала.

Извӗҫпе краҫҫин шӗвекне ҫапла хатӗрлеҫҫӗ. 4 килограм сӳнтермен извӗсе сӳнтерсе ун ҫине 10 литр шыв хушмалӑ, тата 1 килограм краҫҫин йарса хутӑштармала, ҫапла хатӗрленӗ шӗвек кашни тӑваткӑл метр ҫине 0,5 йе 1 литр таран кирлӗ.

Извӗҫсӗр пуҫне тата ампарсене каустически содӑ шӗвекӗпе те дезинфекцилеме пулать. Кун пек чухне 1 литр шыв ҫине 120—150 грам содӑ йарса хутӑштарса сӗрмеле.

Ампарсен айӗнчи тата вӗсен йӗри-тавра 10 метртан кайа мар ҫывӑхӗнчи тусана, ҫумкурӑксене, тӗрлӗрен тӑккаланчӑксене йалтах пуҫтарса тасатмала, пухнӑ ҫӳп-ҫапсене ҫунтарса, йе ҫӗре 0,5 метр тарӑнӗш алтса хумала. Тасатнӑ вырӑна сӳнтермен извӗҫ 1—2 сантиметр хулӑнӗш сапса тухмала.

Ампарсене дезинфекци тунӑ хыҫҫӑн алӑксене уҫса уҫӑлтармала. Ҫак ҫӳлте каланӑ пек пур тырӑ авӑртмали предприйатисене—армансене т. ыт. те сӑвӑҫсенчен тасатас пулать.

Йалхуҫалӑх машинисене — молотилкӑсене, комбайнсене, сортировкӑсене, трактӑрсене, турттармали йапаласене—урапасене, михӗсене, шӑналӑксене тата ыт. те тырӑ вырнӑ ҫӗрте, акнӑ чухне тата аван ҫапнӑ ҫӗрте усӑ курмали йапаласене—пурне те ҫуса тасатса дезинфекци тумала.

Машинӑсен йӑвӑҫ пайӗсене, михӗсене, шӑналӑксене тата ытти асӑннӑ йапаласене пурне те вӗри шывпа йе кӗлпе вӗретнӗ шывпа ҫуса хӗвел ҫинче йе ҫилпе типӗтмеле; машинӑн тимӗр пайӗсене ҫупа тата краҫҫинпа сӗрсе тасатмала. Машинӑсене тата ытти йапаласене йаланах асӑрхаса тӑмала, пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна илсе кайнӑ чухне тепӗр хут тӗплӗн тасатмала.

Кивӗ итемсем ҫинче тырра сӑвӑссем йересрен ҫыхланмала. Вӗсене тӗплӗн тасатмала, тасатнӑ ҫӳп-ҫапсене ҫунтарса йамала. Ҫавӑн пекех итемсене улӑм куписенчен тасатмала,—вӗсен вырӑнне 20 сантиметр тарӑнӗш сухаламала, ҫийелтен сӳнтермен извӗҫпе 2—3 сантиметр хулӑмӗш сапса пичӗрӗнтермеле.

Тырра кӗлетсене хуриччен малтан сӑвӑссем пуррипе ҫуккине тӗрӗслесе тухма кирлӗ. Сӑвӑссене палӑртсан, вӗсене пӗтермеле. Ампарсене хуракан тырӑра нӳрӗ 13—14 процентран мала пулмала мар. Тырра ампарсен ҫывӑхӗнчен 100 метр айакарах тасатмала, тасатнӑ йулашкисене пӗтермеле йе вӗри шывпа пӗҫерес пулать. Вӑрлӑхлӑх тырӑсене тата суртлӑ тырӑсене уйрӑмӑн усрамала, ампарта тырӑ хулӑмӑшӗ 1,5—2 метртан мала пулмала мар.

Сӑвӑссене ӗрчеме ӑшӑ 8—10 градус тата нӳрӗ пулни аван условисем пулса тӑрать. Ҫавӑнпа та ампарсене хунӑ тырӑ ытлашши хӗрсе йе нӳрелсе кайасран сӑнасах тӑрас пулать, час-часах ампар алӑкӗсене уҫса уҫӑлтармала.

Кӗлетри тӑккаланчӑксене тата ҫӳпӗсене пӗр пекех шӑлса тухса тасатсах тӑмала. Тырӑ усракан ампарсене кӗриччен малтан урасене, тумтирсене тата ытти йапаласене те тасатса кӗмеле, мӗншӗн тесен сӑвӑссем вӗсем ҫумне ҫыпӑҫса кӗме пултараҫҫӗ.

Тырра аван пӑхса усрас ӗҫе кладовщиксене, колхоз активне тата колхозри пахалӑх инспекторӗсене пурне те йавӑҫтармала.

Агроном Н. И. Кондаков.

Тырпулсене пуҫтарса кӗме хатӗр

Оринкири „Хӗрлӗ Сормово“ колхоз (Тутаркас р.) ҫуртри калчисем ҫинчен ҫумкурӑксене ҫумласа тасатса ҫитӗрнӗ хыҫҫӑн хӗрсех тырпулсене пуҫтарса кӗрес ӗҫе хатӗрленме тытӑнчӗ. Хаљ йалхуҫалӑх машинисене тата ытти ӗҫхатӗрсене пурне те йусаса хатӗрлесе ҫитерне.

Ҫав вӑхӑтрах кӳршӗри „Восток“ колхоз тырпулсене пухса кӗме хатӗрленес тӗлӗшпе нимӗн те тумасть. Вӑл ҫеҫ те мар, кунта уйри ҫумкурӑксене те ҫумламан.

И. Николайӗв.

Лаша кӳлмели хатӗрсем ҫитмеҫҫӗ

Республикӑри хӑшпӗр колхозсем утӑ ҫулма тухрӗҫ. Ҫитес кунсенчех пур колхозсем те утӑ ҫулма тухаҫҫӗ. Тырпулсене пухса кӗме тытӑнас вӑхӑт та нумай йулмарӗ. Ҫавӑнпа та пур колхозсен те тырпулсене пуҫтарса кӗме хатӗр тӑмала. Анчах, Тренкассинчи (Шупашкар р.) „Актив“ колхоз тырпулсене пуҫтарса кӗме хатӗрленмеппе пӗрех. Витнӗ итемсене пӗлтӗрхи кив уламсенчен тасатман, вӗсен тӑррисене витмен. Жнейкӑсем, молотилкӑсем йусавсӑр лараҫҫӗ.

Колхозра лаша кӳлмели хатӗрсем ҫитмеҫҫӗ. 40 лашаран 20 лашан кӑна кӳлмели хатӗрсем пур. Колхозӗпе йусавлӑ урапасем 25 ҫеҫ.

Г. Петров.

Ҫӗрпӳри Мичурин суртлӑ ҫырла йӑвӑҫ пунктинче.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Бригадир Илларионӑв (сулахайри) 1 ҫулхи лимон йӑвӑҫҫине колышкӑ ҫумне ҫыхать.

Петров фото-ӳкерчӗкӗ.

Колхозсем утӑ ҫулаҫҫӗ

Ҫӗрпӳ районӗнчи пур колхозсем те ийулӗн 7-мӗш тӗлне утӑ ҫулма тухрӗҫ. Вӗсем утӑ ҫулса пӗтерсе ӑна типӗтсе пуҫтарса купалас ӗҫсене ийулӗн 10-мӗш тӗлне вӗҫлессишӗн ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ.

Ийулӗн 7-мӗш тӗлне 8 колхозра утӑ ҫулса пӗтерне. Ҫак колхозсенче утӑна пӗтӗмпех лайӑх типӗтсе ҫитерне. „Совет“ колхоз утӑ ҫулса пӗтерне хыҫҫӑнах, районри колхозсенчен чи малтан государствӑна паха утӑ лессе пачӗ.

„Хӗрлӗ флот“ колхоз йышлӑ выљӑхсем ваљљи ҫителӗклӗ апат хатӗрлессишӗн тӑрӑшса ӗҫлет, кӑҫал вӑл утӑ ҫулас ӗҫе ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗ. Ҫавӑн пекех выљӑхсене ҫитерме ҫилос ытларах хывса хӑварассишӗн ҫине тӑрса ӗҫлет. Пайанхи кун тӗлне ку колхозра тӗрлӗрен курӑксене 42 тоннӑ ҫилоса хывнӑ.

К. К.

Машинӑсене хатӗрлемен

Пысӑк Йенкассинчи (Вӑрмар р.) „Трактӑр“ колхозра тырпулсене уйран пуҫтарса кӗме хатӗрленес ӗҫ пит начар пырать. Тырпулсем пулса пыраҫҫӗ, „Трактӑр“ колхозра ку вӑхӑтченех жнейкӑсене те йусаман. 4 жнейкӑ иртнӗ ҫулта ӑҫта лартнӑ, ҫавӑнтах ҫӗмрӗк лараҫҫӗ. Жнейкӑсен пайӗсем ҫитмеҫҫӗ. Колхоз правленийӗ машинӑсен пайӗсене тупасси ҫинчен шухӑшласа пӑхман пулас.

Колхозниксен ҫурласем ҫителӗксӗр. Йалпо магазинне ҫурласене кӳрсе килмеҫҫӗ. Ҫурласене колхозра халӗ те шӑллаттарман.

Утӑ ҫулма тухмала—ҫавасене туптатман. Ҫавӑн пекех витнӗ итемсем, молотилкӑсем, урапасем йусавсӑр.

Пысӑк Йенкассинчи „Трактӑр“ колхозӑн йулса пымала мар. Ӑнса пулнӑ тырпула вӑхӑтра тата тӑкаксӑр пуҫтарса кӗме пур йенчен те тӗплӗн хатӗрленмеле.

А. Никифӑрӑв.

Колхоз ӗҫ планӗ тунӑ

Кивӗ Акчурари (Сӗнтӗрвӑрри р.) „Ленин ҫулӗпе“ колхоз членӗсем уйри тырпулсене пуҫтарса кӗме тӗплӗн хатӗрленеҫҫӗ. Молотилкӑсене лайӑх йусаса хучӗҫ. Кӗлтесем турттарма 24 урапа хатӗрленӗ. Тырӑ турттарма михӗсем, шӑналӑксем кирлӗ чухлӗ хатӗрленӗ. Хаљхи вӑхӑтра колхозниксем ҫӗнӗ тырра хумалли ампарсене ҫуса тасатаҫҫӗ, дезинфекци тӑваҫҫӗ.

„Ленин ҫулӗпе“ колхоз тырпулсене пухса кӗме хатӗрленессине колхозӑн ытти ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтарса пырать. Фермӑ витине йусаса лартрӗҫ, фермӑра ӗҫлекенсем ваљљи ҫӗнӗрен пӳрт лартнӑ.

Колхоз тырпулсене пухса кӗме ӗҫ планӗ тунӑ. План тӑрӑх, кашни колхозника уйрӑм ӗҫсем ҫумне ҫирӗплетсе тухнӑ.

М. Матвейӗв.

Колхозсем автомашинӑ туйанаҫҫӗ

Колхозсен пуйан пурнӑҫӗ ӳссе пынӑ май, вӗсем ҫулсеренех ытларах та ытларах автомашинӑсем туйанаҫҫӗ. Акӑ Патӑрйел районӗнчи „Хӗрлӗ Октӑбӗр“ колхоз государствӑна аш-какай сутса ҫак кунсенче автомобил туйамнӑ. Автомашинӑна лайӑх пӑхса усрама колхоз гараж туса лартнӑ. Ҫавӑн пекех Елӗк районӗнчи Чулкаҫри „Смычкӑ“ колхоз та грузовик илнӗ.

Совет суту-илӳвӗ хисеплӗ вырӑна йышӑнмалах

ТӐВАЙ (хамӑр корр.) Районри суту-илӳ организацисем ҫулран-ҫулах таварсем ытларах кӳрсе килеҫҫӗ. 1935 ҫулта районри лавкасемпе магазинсенче 855.000 тенкӗлӗх, 1936 ҫулта 1.589.949 тенкӗлӗх тӗрлӗрен тавар сутнӑ пулсан, 1937 ҫулта 2.891.806 тенкӗлӗх сутнӑ.

Халӗ йалсенче ҫӗнӗ магазинсем, лавкасем уҫаҫҫӗ. Тӑвайпа Тушкилтре магазинсем тата Елпуҫӗнче, Тӗне йалӗнче, Нӳшкассинче ҫӗнӗ лавкасем уҫнӑ. Суту-илӳ ӗҫӗнче отличниксемпе стахановецсем ӳсеҫҫӗ. Тушкилт лавкинчи прикашчик П. Петров, Йантӑрч прикашчикӗ И. Нойӗв, Нӑрвашри прикашчик Исайӗв йулташсем стахановла ӗҫлесе, таварҫаварнӑш планне йаланах тултарса пыраҫҫӗ. Тушкилт йалповӗн председателӗ И. Семенӑв йулташ потребкооперацинче 1932 ҫултанпа ӗҫлет,—вӑл йалпора ку тариччен пӗр растрата та пулман.

Ҫаксемпе пӗрлех суту-илӳ ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур.

Суту-илӳ организацисем ӗҫҫыннисене кулленех кирлӗ таварсене ҫителӗклӗ тӑратассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ. Ҫӑлпуҫӗнчи, Мучарти тата Елпуҫӗнчи йалпосенче чылай вӑхӑт хушши махоркӑ, спичкӑ, сахӑр пулмарӗ. Варманхӗрринчи лавкара спичкӑ тата тӑвар пулмарӗ. Ку вӑл—каҫарма ҫук пысӑк ҫитменлӗх.

Суту-илӳ организацисен умӗнче кӑҫал пит те ответлӑ, пысӑк задачӑсем тӑраҫҫӗ. Райсойуз 1938 ҫулхи таварҫаварнӑш планне 3.500.000 тенкӗлӗх ҫирӗплетнӗ. Иртнӗ ҫултипе танлаштарсан, кӑҫал 30 процент ытларах тавар сутмала.

Суту-илӳ организацисенче пулнӑ тӑшмансен сӑтарлӑ ӗҫӗсен йулашкийӗсене пӗтермеле. Анчах сӑтарлӑ ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтерес тӗлӗшпе ҫителӗклӗ ӗҫлени курӑнмасть-ха. Район центрӗнчи магазинра ӗҫлекен П. Г. Сымокин суту-илӳре киревсӗр ӗҫсем туса пынӑ. Тавар хакӗсене хӑй ирӗкӗпех ӳстерсе сутнӑ. Акӑ, 25 тенкӗ тӑракан брӳкине 35 тенке, ачасем выљамали йапаласене 14 тенкӗ вырӑнне 19 тенке сутнӑ. Вӑл час-часах магазина кунӗпех хупӑ тӑратса халӑха тарӑхтарнӑ.

Тӑвайӗнчи столовӑй питӗ начар ӗҫлет. Столовӑй кашни уйахра тенӗ пекех йалпона пысӑк тӑкак кӳрет, столовӑй ирхине икӗ сехет ӗҫлет те, ик-виҫ сехет хушши хупӑ тӑрать. Каҫхине каллех вӑхӑт ҫитмесӗрех хупса хураҫҫӗ.

Халӗ тырпулсене пухса кӗме хатӗрленесси пырать. Анчах та лавкасенче кирлӗ таварсене—ҫава, тикӗт т. ыт. те тупса илме ҫук.

Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсене пӗтерсе, суту-илӳ ӗҫне вӑйлатса йамала.

Ал. Пикишкин.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленес ӗҫ

ТӐВАЙ. Районра ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленес ӗҫ сӳрӗккӗн пырать. Кӑҫал районри шкулсене ҫӗнӗрен 960 ача вӗренме илмеле, 3 туллимар шкул тата пӗр пуҫламӗш шкул ҫурчӗсене тӗпрен йусамала, ытти шкул ҫурчӗсенче ҫӑмӑл йусавсем тумала. Анчах та ҫак ӗҫсем ҫине шкул директӑрӗсемпе заведуйушчийӗсем ҫийелтен пӑхаҫҫӗ, пайанхи куна ҫитсе те вӗсем мӗн кирлине тума тытӑнман.

Елпуҫӗнче 218 ача вырнаҫмалӑх ҫӗнӗ шкул ҫурчӗ тума пуҫланӑ. Ӑна ҫентӑберӗн 1-мӗш тӗлне туса ӗлкӗртмеле, анчах халӗ шкулӑн никӗсне ҫеҫ хывнӑ-ха. Строительствӑ материалӗсем ҫителӗксӗр, вӗсене турттаракансем никам та ҫук.

Тӑвай вӑтам шкулӗн ҫурчӗ ҫӑмӑр кайнипе ҫӗрсе ларать. Ӑна витме шухӑшламаҫҫӗ. Ҫӗнӗ Ишпуҫ пуҫламӗш шкул заведуйушчийӗ Иванов вӗренӳ ҫулӗ пӗтнӗ хыҫҫӑн шкул ҫинчен пачах маннӑ. Кунта кӗркуннехи тӗрӗслеве хӑварнӑ вӗренекенсем чылай, вӗсемпе халӗ никам та ӗҫлемест.

Учителсен квалификацине хӑпартас май, кӑҫал 45 учителе тӗрлӗрен курссенче вӗрентме палӑртнӑ, анчах пайанхи куна курса вӗренме пӗтӗмпе те 18 учител ҫеҫ кайнӑ.

Районри сутӗҫ пайӗн ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленес ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелемеле.

Вл. Борисӑв.

ҪӖМӖРЛЕ РАЙОНӖ. Мӑн Улхаш йалӗнче икӗ шкул. Вӑтам шкулта кӑҫал 14 клас пулмала. Кӑҫалччен вӑтам шкулӑн класӗсем икӗ ҫуртра вырнаҫса пурӑннӑ. Вӑл ҫуртсем тӑвӑр пулнипе йалти ӗҫҫыннисем райӗҫтӑвком умне ҫӗнӗ шкул ҫурчӗ лартас ыйту лартрӗҫ, анчах райӗҫтӑвком ку ыйтуран пӑрӑнса вӑтам шкула пуҫламӗш шкул ҫуртне вырнаҫтармала турӗ. Пуҫламӗш шкул ҫуртне 1935 ҫулта лартнӑ, ҫапах та вӑл вӑтам шкулӑн 14 класӗ ваљљи тӑвӑр пулать, кунта вырӑн пӗтӗмпе те 8 класлӑх ҫеҫ. Ку ыйтӑва мӗнле те пулин татмалах.

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленес ӗҫ ытти йенӗпе те начар пырать. Мӑн Улхашри пуҫламӗш шкул ваљљи 350 кубла метр вутӑ кирлӗ, анчах халӗ пӗр вутсыпи те турттарман.

Вӑтам шкулта та ӗҫсем йапӑх. Кӑҫал ҫӗнӗрен 50 партӑ, 10 доска тумала, кивисене 80 партӑ, 10 доска йусаттармала. 300 кубла метр вутӑ турттарса хатӗрлемеле, 2.000 тенкӗлӗх вӗренӳ хатӗрӗсем илмеле. Ҫак ӗҫсенчен халӗ пӗрне те туман. Шкул директӑрӗн, шкулти учителсен коллективӗн васкамала.

Гр. Петров.

Зайом выљавӗсене тӗрӗсленӗ

ТУРХАН. Аслӑ Арапуҫӗнче суйлав кунӗ—ийунӗн 26-мӗшӗнче—кунӗпех зайом облигацийӗсене тӗрӗслес тата зайом ыйтӑвӗсем тӑрӑх тӗрлӗ справкӑсем парас тӗлӗшпе справкӑ сӗтелӗ ӗҫленӗ. Вӑл кун нумай суйлавҫӑсенне зайомӗсене выљав таблицисем тӑрӑх тӗрӗслесе панӑ. Пилӗк ҫынна выљав тупса панӑ. Йемељйанӑв Алексейӗн зайом облигацийӗ 100 тенкӗ выљаса илнӗ.

К. Шурйаков.

Интернационалисӑм—совет патриочӗн йалавӗ

Совет патриотисӑмӗн таса туйӑмӗ тӑван ҫӗршыв телейӗшӗн пыракан йӑвӑр та чаплӑ ҫапӑҫӑвӗсенче ҫуралса чечекленнӗ. Ҫав туйӑмра тӑван ҫӗршыв — социалисӑм ҫӗршывне хӗрӳлӗн йуратни, унӑн вӗҫӗ-хӗррисӗр талкӑшӗсенче ирӗклӗ пурнӑҫпа пурӑнакан халӑхсен мухтавлӑхӗпе чапӗ, пирӗн парти, Ленин тата Сталин йертсе пынипе тунӑ калама ҫук пысӑк ҫӗнтерӳсемшӗн хӗпӗртесе савӑнни пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ. Совет патриотисӑмӗ вӑл—експлоататӑрсемпе пусмӑрҫӑсен суйа „патриотисӑмӗнчен“ тӗпренех уйӑрӑлса тӑрать.

Совет патриотисӑмӗ вӑл—халӑха хӗрӳлӗн йуратни, пусмӑрҫӑсене, фашисла варвӑрсене тата вӗсен троцкисла-бухаринла тарҫисене пысӑк тарӑхупа курайми тӑни пулать. Интернационалисӑм—совет патриочӗн иксӗлми пахалӑхӗ, унӑн ҫулӑмлӑ йалавӗ. Ҫав туйӑмсем вӗсем иккӗшӗ те таччӑн пӗтӗҫсе тӑраҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем иккӗшӗ те пӗр ҫӑлкуҫран тухаҫҫӗ—ӗҫҫыннисен социалисӑмшӑн, Ленин—Сталин парти ӗҫӗшӗн пыракан кӗрешӗвӗнчен тухаҫҫӗ.

Ҫакна Севастопољрен Архангельска ҫити чаплӑн вӗҫсе тухнӑ Верӑ Ломако хӑйӗн пайан „Правда“ хаҫатра пичетленекен статйинче питех те уҫҫӑн кӑтартса панӑ.

„Халӗ ӗнтӗ, хамӑр вӗҫсе тухнӑ хыҫҫӑн,—тесе ҫырать вӑл,—пирӗн-

хирӗҫ хӑйсен тӑванӗсемпе тата упӑшкисемпе пӗрле кӗрешекен республикӑлӑ Испанипе Китайри паттӑр хӗрарӑмсене аса илет. Вӗсем пирӗн пурнӑҫа, хӑйсен класлӑ тӑванӗсен пурнӑҫне пысӑккӑн сӑнаса пыраҫҫӗ, вӗсем пирӗнтен кӗрешме тата ҫӗнтерме вӗренеҫҫӗ“.

Испанипе Китай паттӑр халӑхӗсене йепле ӑшшӑн та ачашшӑн йуратнине кӑтартаҫҫӗ те ӗнтӗ советӑн хайулӑ та паттӑр патриоткин ҫак сӑмахӗсем! Ҫакӑн пек ӑшӑ кӑмӑлпа, йуратупа пӑхать те ӗнтӗ кашни совет ҫынни хӑйӗн йут ҫӗршывсенчи тӑванӗсем ҫине, мӗншӗн тесен совет патриочӗсен интернационалисӑмӗ боЉшевисӑмӑн револЉуцилӗ традицисен никӗсӗнче ҫирӗпленсе тӑрать.

Пирӗн халӑх хӑйсемпе пӗр шухӑшлӑ пулнине тата пӗр-пӗрне тӑванлӑ пулӑшу панине хаклама пӗлет. Граждӑн вӑрҫи ҫулӗсенче тата социалисӑм строительствине анлӑн илсе пынӑ ҫулсенче пӗтӗм тӗнчери рабочисемпе малта пыракан ҫынсем хӑйне пулӑшнине совет халӑхӗ нихҫан та манмасть. Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе пирӗн ҫӗршыври халӑхсем шалтипе тулти тӑшмансене тӑрӑ шыв ҫине кӑларса ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ, Советсен республикине империалиссемпе троцкисла-бухаринла агентурин каварлӑшӑвӗнчен хӑтарса хӑварчӗ. Социалисӑм кӗрешӳвӗн пур тапхӑрӗсенче те тӑванлӑ сойузӗ—пролетарилӗ интернационалисӑм йалавне ҫӳлте ҫӗклесе пынӑ, халӗ те ҫапла ҫӗклесе пырать.

Пирӗн ҫӗршыври ирӗклӗ пурнӑҫпа пурӑнакан халӑхсем—пӗтӗм халӑхсен йулташӗсем. Ҫавӑнпа та Совет Сойузӗ Испанипе Китай халӑхӗн кӗрешӗвне пысӑк тимлӗхпе тата пысӑк интереспа сӑнаса пырать. Пирӗн аслӑ ҫӗршывӑн пур кӗтесӗнче те рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийӗ Испани, Китай, Чехословаки ҫине,—пур ҫӗршывсенчи рабочисен фашисӑма хирӗҫ кӗрешӗвӗ ҫине тимлӗн пӑхса тӑраҫҫӗ.

ССР Сойузӗнчи ӗҫҫыннисем—Испанипе Китай халӑхӗсем ҫӗнтерессишӗн, фашисӑма парӑнтарассишӗн тӑраҫҫӗ.

Аслӑ та нумай асап тӳснӗ Китай халӑхӗ хӑйӗн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан паттӑрла кӗрешӳн иккӗмӗш ҫулне кӗрет. Кӗрешӳ пынӑ май вӑл хӑйӗн ӗҫӗнчи ҫитменлӗхе пӗтерме пултарчӗ: мӗн пур вӑйсен пӗрлӗхне тата пӗр-пӗрипе таччӑн пӗтӗҫсе тӑрассине тума пултарчӗ. Иртнӗ ҫулхи опыт Йапони захватчикӗсем хӑйсен тӗллевне пурнӑҫа кӗртме пултарайманнине, Китайа хӑйсен колонийӗ туса хума пултарайманнине кӑтартрӗ. „Ҫӗршыв пӗрлешни куҫ умӗнчех ӗнтӗ, пӗтӗм тӗнчери демократилӗ вӑйсем пирӗн ҫине йуратса пӑхаҫҫӗ, пире пулӑшаҫҫӗ,—тесе каланӑ Китай республикӗн Уйрӑм районӗнчи правительствӑн председателӗ Мао Цзе-дун.—Пуллах, кӗрешӳ пынӑ май пирӗн вӑйсем тата пирӗн хӑват ӳссех пырӗ... Китайа Йапони

пултараймӗҫ“.

Китай халӑхӗ пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисемпе тӳрӗ кӑмӑлла мӗн пур демократсем пулӑшнине туйать. Китай, хӑйӗн вӑйӗсем ҫине шанса, ирӗке тухассишӗн кӗрешет, вӑл пӗтӗм етемлӗхе ирӗке кӑларассишӗн кӗрешет. Китайра фашиссем халӑхсене пӑхӑнтарса тӑрасси пулмалли йе пулмала марри ҫинчен ыйту татӑлать. Ҫавӑнпа та ӗнтӗ ирӗке тухассишӗн пыракан Китайри вӑрҫӑн револЉуцилӗ содержанийӗ калама ҫук пысӑк.

Китайпа Испанири халӑх массисем, пӗтӗм тӗнчери рабочи класпа малта пыракан елементсем пирӗн ҫӗршыври социалисӑм ҫӗнтерӗвӗсене, фашисла вӑрҫӑ чӗртекенсене хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗрте мирпе прогресӑн тӗрекӗ пулса тӑракан Совет Сойузӗн хӑвачӗпе вӑйӗсем ӳссе пынине хавасланса тата пысӑк шанчӑклӑхпа сӑнаса пыраҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыври халӑхсем, ленинла-сталинла интернационалисӑмпа совет патриотисӑмӗн шухӑшӗпе ҫитӗннӗ халӑхсем, тӗнчери пур ҫӗршывсенче те хӑйсене пулӑшакан ҫынсем пуррине, тӑшмансем тӑпӑнас-мӗн пулсан пирӗн ҫӗршыв майлӑ тӑрса тухакан ҫынсем пуррине пӗлсе тӑраҫҫӗ.

Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ ССР Сойузӗн пӗтӗм тӗнчери тусӗсем сойузлӑ тата автономлӑ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсенче, ССР Сойузӗнчи халӑхсен морољлӗ-политикӑлӑ пӗрлӗхне, совет правительствине, боЉшевикла партине тата Сталин йулташа вӗҫӗмсӗр йуратса тӑнине пӗтӗм етемлӗх умӗнче кӑтартса панӑ суйлавсенче, коммунистсемпе пар-

ҫӗнтерӳне пысӑк хавасланса йышӑнчӗҫ. Ҫак йенчен илсен, хаљ анчах пулса иртнӗ суйлавсем,—халӑхсем хушшинче интернационалисӑм туйӑмӗпе халӑхсен пӗр тӑвӑнлӑхне питех те уҫҫӑн кӑтартнӑ суйлавсем,—пӗтӗм тӗнчипе калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Суйлавсен пӗтӗм тӗнчери пусмӑрта пурӑнакан халӑхсене хӑйсен пусмӑрҫисене хирӗҫ—фашисла варвӑрлӑха хирӗҫ кӗрешме ҫӗнӗрен хавхалантарчӗҫ. Совет Сойузӗ вӑл—социалисӑмӑн тата чӑн-чӑн демократин чӑн-чӑн тӗрекӗ пулса тӑнине пӗтӗм тӗнчери халӑхсем пӗлеҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери событисем вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗ тата ССРС ҫине вӑрҫӑпа тапӑнасси вӑйланнине кӑтартса параҫҫӗ. Анчах халӑхсем фашисла пусмӑрҫӑсемпе варвӑрсене хирӗҫ кӗрешесси те вӑйлӑланса пырать. Пирӗн ҫӗршыва хупӑрласа тӑракан капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче вӑйсем пӗр-пӗринчен уйӑрӑлаҫҫӗ. Пӗр йенчен, Англири, Францири тата ытти ҫӗршывсенчи буржуазин реакцилӗ елеменчӗсем халӑхсен фашисӑма хирӗҫ кӗрешес йухӑмне мӗн пур вӑйпа пӗтӗрсе лартма тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсем ытти государствӑсен шучӗпе тата ССРС—рабочисемпе хресченсен социалисӑмлӑ государствӑ шучӗпе—фашисла агрессӑрсемпе калаҫса таталма тӑрӑшаҫҫӗ. Тепӗр йенчен, ҫавсене хирӗҫле фронта,—мирпе прогресӑн фрончӗ, демократи фрончӗ те ҫирӗпленсе, вӑйлӑланса пырать, халӑхсен фашисӑма хирӗҫ кӗрешес йухӑмӗ сарӑлнӑҫемӗн сарӑлса пырать. Фашисӑма хирӗҫ кӗрешекен пӗтӗм тӗнчери вӑйсем пирӗн ҫӗршыври рабочи класпа тата ӗҫҫыннисемпе сойуз тунни—акӑ фашисӑма, реакцине тата вӑрҫӑ пуласшине чарса лартмали никам ҫӗнтерейми хӑватлӑ вӑй.

Хаљхи вӑхӑтра пӗтӗм тӗнчери лару-тӑру питех те йӑвӑрланса кайнине шута илсе, Сталин йулташ сӑмахӗсене татах тепӗр хут аса илтерме кирлӗ: „ССР Сойузӗнчи рабочи клас буржуалӑ ҫӗршывсенчи рабочи класпа интернационаллӑ пролетарилӗ ҫыхӑнса тӑрассине вӑйлатмала тата тӗрекӗлетмеле... Нимӗнле „ӑнсӑртлӑх“-та тата пирӗн тулти тӑшмансен нимӗнле фокусӗсем те пире кӗтмен ҫӗртен пырса ан тивччӗр, тесе хамӑрӑн пӗтӗм халӑха вӑрҫӑпа тапӑнас хӑрушлӑх умӗнче мобилизацилӗ хатӗр тытса тӑмала...“

Сталин йулташ пӗтӗм парти умӗнче тата пӗтӗм халӑх умӗнче лартнӑ ҫак калама ҫук пысӑк задача татса пани—интернационалисӑм туйӑмне малала ҫирӗплетсе пынине тата пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисен массисене интернационалисӑм шухӑшлӗ туса вӗрентсе ӳстерессине пӗлтерет.

Кашни ӗҫҫыннинех пролетарилӗ интернационалисӑм шухӑшлӗ туса вӗрентсе ӳстерес—кашни парти организацийӗн, кашни боЉшевикӑн тивӗҫӗ пулса тӑрать. Совет патриочӗн чӗри пӗтӗм тӗнчери пролетарисемпе пусмӑрта пурӑнакансен чӗрипе пӗр кӗвӗлӗн тапса тӑрать. Мӗншӗн тесен пролетарилӗ интернационалисӑм вӑл—совет патриочӗн йалавӗ!

(„Правда“, ийулӗн 6-мӗшӗ).

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Отчотпа суйлав пухӑвӗн решенисене епӗр-мӗнле пурнӑҫлатпӑр

Шупашкар хула совечӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш парторганизацин отчотпа суйлав пухӑвӗ пулнӑранпа икӗ уйӑх ытла иртрӗ. Партком отчочӗ тӑрӑх тухса калана коммуниссем парторганизацин тӗп ҫитменлӗхӗсене палӑртрӗҫ. Партком отчочӗ тӑрӑх йышӑннӑ резољуцире парти группипе хула совечӗн аппарачӗ депутатсенчен татӑлса кайнине, парторганизаци хула совечӗн ӗҫне лайӑхлатас, работниксем хушшинчи ӗҫ дисциплинине хӑпартас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртнӑ. Пухура ҫавӑн пекех партком парти вӗрентӗвне начар йӗркеленине, комсомол организацине ҫителӗксӗр йӗртсе пынине, парти кандидачӗсемпе тата сочувствуйушчисемпе ҫителӗксӗр ӗҫленине критиклене.

Пуху партилӗ-политикӑлӑ ӗҫе хуҫалӑх ӗҫӗсемпе тӗрӗс ҫыхӑнтарса пыма хушнӑ. Пуху йышӑннӑ решенинче: парторганизацин ҫывӑхри тӗп задачи вӑл—РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне лайӑх хатӗрленсе иртересси тата кӑҫалхи капитаљнӑй строительствӑпа благоустройствӑ планӗсене пурнӑҫласси пулаť, тенӗ.

Хула совечӗ хаљ ӗнтӗ хӑйӗн ӗҫӗсене, ӗлӗкхи пек килхуҫи хӗрарӑмсемпе ҫеҫ мар, хула совет депутачӗсем урлӑ туса пыма тытӑнчӗ. Кашни депутата уйрӑм порученисем парса, порученисене пурнӑҫланине тӗрӗслеме тытӑнчӗ. Паллах, ку вӑл килхуҫи хӗрарӑмсемпе ӗҫлемеле мар тенине пӗртте пӗлтермест, вӗсем хушшинчи актива куллен вӗрентсе пымала, ӗҫре пулӑшмала. Хула совет депутачӗсене пур майсемпе те РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй совечӗсене суйлама хатӗрленес ӗҫе хутшӑнтарнӑ. Депутатсем участкӑсенче суйлавҫӑсем хушшинче политикӑлӑ агитаци ӗҫне йӗркелес, суйлавҫӑсен списокӗсене хатӗрлес тӗлӗшпе нумай ӗҫлерӗҫ. Хула совет президиумӗн членӗ, сочувствуйушчи Кудрйашов йулташ тата Ахлаткинӑ, Калиновскайа, Маркосӑв йулташсем суйлав участкисенче уйрӑмах лайӑх ӗҫлерӗҫ.

Партире тӑман хула совет депутачӗсем Старостин, Стожаров, Покровский тата ытти йулташсем те суйлавҫӑсен списокисене тунӑ ҫӗрте активлӑ ӗҫлерӗҫ.

Пуҫламӗш парторганизаци суйлава хатӗрленес ӗҫри ҫитменлӗхсем ҫинчен сӳтсе-йавса, вӗсене вӑхӑтра пӗтерме пулӑшнӑ. Кайа йулса пыракан участкӑсем ҫумне партком членӗсене ҫирӗплетнӗ. Суйлав кампанинче уйрӑмах парти кандидачӗ, хула совет ҫекретарӗ Барабанӑв, Коваљова—парти членӗ, Коњцов—партком членӗ активлӑ ӗҫлерӗҫ.

Капитаљнӑй строительствӑ ӗҫӗ мӗнле пыни ҫинчен коммуналлӑ хуҫалӑх пайӗн пуҫлӑхӗ пулнӑ Маслов йулташ докладне итлерӗмӗр. Пуху ҫакна палӑртрӗ. Маслов йулташ ӗҫ ҫине формаљнӑ пӑхнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл ҫурт-йӗрсем тӑвас, урамсене асфаљт сарас тӗлӗшпе нимӗн те туман. Маслов йулташа ӗҫрен хӑтарчӗҫ. Ун вырӑнне строительствӑра деҫатник пулса ӗҫленӗ, парти кандидатне Инайӗв йулташа лартнӑ. Паллах, ӑна пуҫламӗш парторганизацин ӗҫре пысӑк пулӑшу памала.

Партком хулари коммуналлӑ хуҫалӑхӑн ҫурт йӗрсене ремонтлакан кантурӑн ӗҫӗсене тӗрӗслесе тухрӗ. Кунта кантур пуҫлӑхӗнче пустуй пакӑлтатма йуратакан Михайлӑв ларнӑ. Вӑл 5 уйӑх ӗҫленӗ, анчах унӑн мӗн чул кадр пуррине тата мӗн чул кирлине, мӗн чул строиматериал пуррине тата мӗн чул кирлине тӗ пӗлмест. Вӑл хӑй мӗн ӗҫ тунине те калама пултараймасť. Ҫамрӑк специалис-техниксене—Кордин, Павлӑв, Антонӑв йулташсене—пурте вӗсем комсомолӗҫсем—ӗҫлеме условисем туса паман пирки, вӗсем ӗҫрен тухса кайма зайавленисем панӑ. Ийунӗн 20-мӗш тӗлне 24 ҫурта ремонтлас вырӑнне, 4 ҫурта ҫеҫ ремонтланӑ. Ремонт ӗҫне плансӑр туса пыраҫҫӗ. Строиматериал ӑҫта кайнине учот туса пымаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та материала ӑҫта кирлӗ унта салатса пӗтерес-ҫӗ. Паллах, кун пек ҫынна пӗр кун та ҫав ӗҫре тытса тӑма май ҫук. Ҫавӑнпа та ӑна хула совет президиумӗ ӗҫрен кӑлармала турӗ. Ҫурт-йӗрсене ремонтлакан кантурӑн пуҫлӑхне халӗ комсомолӗҫ техник Кордин йулташа лартнӑ. Халӗ ӗҫ лайӑхланма пуҫларӗ.

Малтанхи вӑхӑтра пирӗн ССРС историне вӗренекен кружок начар ӗҫленӗ. Коммуниссем заҥатисене ҫӳремен. Пуху ку кружокӑн ӗҫне чӗртсе йама хушса хӑварчӗ, коммуниссене пӗр сиктермесӗр заҥатисене ҫӳреме хушрӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн кружок заҥатисене вӑхӑтра иртерсе пынӑ, кружока ҫӳрессин процентчӗ хӑпарчӗ, вӗренекенсен активлӑхӗ ӳсрӗ.

Анчах калас пулаť, хӑшпӗр коммуниссем, сӑмахран, Мурзаков, Белых, Караҫов, Попов тата Фимин йулташсем парти вӗренӗвӗнче кайа йулса пыраҫҫӗ, заҥатисене нимӗнле ҫалтавсӑрах ҫӳремеҫҫӗ, пырсан та хатӗрленсе пымаҫҫӗ.

Парторганизаци комсомол организацине ҫителӗклӗ пулӑшман пулнӑ. Хаљ комсомол комитечӗн ҫекретарне—ӗҫе йуратакан Петухов йулташа суйланӑ. Вӑл парторганизаци пулӑшнипе ӗҫе лайӑхлатма тытӑнчӗ. Комсомол организацинче „вилӗ чунсем“ сахал мар пулнӑ, виҫтӑват уйӑх хушши член укҫи тӳлемен, пухусене ҫӳремен комсомолӗҫсем те пулнӑ. Хаљ комсомол пуҫламӗш организаци пухӑвӗсем вӑхӑтра, пысӑк активлӑхпа пулса иртеҫҫӗ. Пухусене сойузра тӑман, коммуналлӑ предприйатисенче ӗҫлекен ҫамрӑксене чӗннине—тӗрӗс темеле.

РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсене суйланӑ вӑхӑтра комсомолӗҫсем тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ, вӗсем ӗҫленӗ урамсенчи суйлавҫӑсем ҫӗр процентчӗпех суйлава пынӑ. Парти комитечӗ комсомол пуҫламӗш организаци ӗҫӗпе хӑй интересленет, докладсем тӑваť,—йатарласа комсомолӗҫсем ваљљи парти историне вӗренмели кружок организациленӗ, кружока коммунис Ҫтепанӑв йертсе пыраť.

Коммуниссен ответлӑхне хӑпартас майпа „Партстроительство“ журналӑн 12-мӗш номӗрӗнчи „Выше звание члена партии Ленина—Сталина“ йатлӑ умстатйипа тата „Коммунисӑн партилӗ обйазаннӑҫӗсем“ йатлӑ статйипа пуҫламӗш парторганизацинче вуланӑ.

Ку статйасене вуланӑ чухне, хӑшпӗр коммуниссем хӑйсен обйазаннӑҫӗсене манса кайни ҫинчен асӑрхаттарнӑ. Сӑмахран, Белых йулташ, Атӑл урлӑ каҫмали перевоз пуҫлӑхӗ, парторганизацинчен уйӑрӑлса кайма пуҫларӗ, парти пухӑвӗсене, кружоксене те ҫӳремест; вӑл ӳсӗр пулни ҫинчен тата Атӑл леш йенне каҫса ҫӳрекенсемпе харкашни ҫинчен ҫигналсем пур. Белых йулташа парторганизаци темиҫе хут та йусанма хушнӑ, анчах вӑл парти кӑтартӑвӗсене пурнӑҫламасť, малала та йусанмасан ытӑва тата ҫирӗпрех лартма лекет, парти членӗ йатне пӑсакансем пулмала мар.

Партком ҫекретарӗ Золотников.

Политзаҥатисем пулмаҫҫӗ

„Шурӑмпуҫ“ колхоз (Ҫӗрпӳ р-нӗ) ҫумӗнчи организацинче 17 комсомолӗҫ. Анчах вӗсене политвоспитани парас ӗҫе начар йӗркеленӗ. Хӗллехи вӑхӑтра комсомолӗҫсем кружокра вӗренетчӗҫ. Халӗ кружок ӗҫлеме пӑрахрӗ, икӗ уйӑх ӗнтӗ заҥатисем пулман.

Комсомол комитечӗн ҫекретарӗ М. Ваҫилйӗв комсомолӗҫсене политикӑлӑ пӗлӳ парассишӗн тӑрӑшмасť. Комсомол райкомӗн пуҫламӗш организацине пулӑшмала.

Чукунсул ҫинчи парторганизацин ӳсӗмӗ

Канаш узӗлӗнче станци парткомӗ—чукунсул ҫинче, депора тата станцинче ӗҫлекен коммуниссене пӗрлештерсе тӑраť. Иртнӗ ҫулта ку парторганизацинче 3 ҫынна ҫеҫ парти ретне илнӗ. Кӑҫал парти ретне ӳстерес тӗлӗшпе чылай ӗҫленӗ. Йанвар уйӑхӗнчен пуҫласа пайанхи куна ҫитиччен 7 ҫынна парти ретне илнӗ, 5 кандидата члена куҫарнӑ, 15 ҫынна сочувствуйушчисен ретне илнӗ.

Парти ретне ӗҫре малта пыракансем кӗреҫҫӗ. Сӑмахран: Кочетков Михаил рйадовой стрелокран взвод командирӗ таран ӳссе ҫитӗнчӗ. Халӗ Кочетков йулташа парти членне илнӗ. Йермолайӗв тата Сорокин йулташсене партин иртнӗ тапхӑрӗнче политикӑ тӗлӗшӗпе начар пӗлнӗшӗн членран парти кандидатне куҫарнӑ. Унтанпа ку йулташсем питӗ тӑрӑшса вӗренчӗҫ, вӗсене хаљ иккӗшне те парти членне куҫарнӑ.

Тулупӑв йулташ суйлав вӑхӑтӗнче хӗрӳлӗ агитатӑр пулса ӗҫленӗ, хаљ вӑл заӗом ҫинчен массӑ хушшинче лайӑх ӑнлантарса параť, ӑна парти кандидатне илнӗ. Парти речӗ ӳсни парторганизаци массӑпа тачӑ ҫыхӑнса тӑнине кӑтартаť. Комсомолӗҫсене партине илессине ПССЛКС Канаш райкомӗ те чылай чӑрмантарса тӑраť. Сӑмахран, транспӑртра ӗҫлекен 6 комсомолӗҫ зайавленине райком хаљ те пӑхса тухман.

Парти вӗрентӗвӗнчи сезонлӑха хирӗҫ

— Пайан сирӗн парти вӗрентӗвӗн кружокӗсем ӗҫлеҫҫӗ-и?

— 6 сехетре, парткабинетра Куҫминпа Николайӗв пропагандиссен кружокӗсен заҥатисем пулаҫҫӗ, ҫавӑнта кайса пӑхӑр, —ответлерӗ ПСК(б)П Канаш райкомӗн куљтурӑпа пропагандӑ пайӗн пуҫлӑхӗ Знаменскайа йулташ.

6 сехет ҫитрӗ. Куҫмин пропагандис пӗччен ларать, кружокра вӗренекен 16 ҫынтан пӗр Йевдокимӑв йулташ ҫеҫ пынӑ.

Николайӗв йулташ кружокӗнче ӗҫ урӑхла, кунта 5 ҫын заҥатине килнӗ, анчах пропагандис килмен. Ҫапла вара икӗ кружокӑн та заҥатисем пулмарӗҫ. Пропагандис пур—вӗренекенсем ҫук, вӗренекенсем пур — пропагандис ҫук. Канаш районӗнче парти вӗрентӗвӗнче сулла майӗпе лӑплану палӑраť. Ку сезонлӑхпа парти райкомӗ те ҫителӗклӗ кӗрешмест.

Михайлӑв.

Совет Сойузӗнчи хуласенче

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Сухуми хулинчи ҫӗнӗ кӗпер. Б. Фишман фотоӳкерчӗкӗ (Сойузфото) „Пресскл.ше“.

Ҫулйӗр строительстви

Конкретлӑ йертсе пыни кирлӗ

Пирӗн республикӑ ҫулйӗр строительстви йенӗпе II-мӗш квартала ӑнӑҫлӑн вӗҫлеймерӗ. Ҫулталӑк планне ҫӗнӗрен ҫулйӗрсем тӑвассипе—23,5 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑмӑнах чул сарас тӗлӗшпе начар ӗҫленӗ, плана пӗтӗмпе те 6 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Ҫ кӑнтан ӗнтӗ республӗкри тата районсенчи ҫулйӗр организацисем ответлӑха туйманни куранаť.

Чылай райӗҫтӑвкомсемпе ҫулйӗр пайӗсен руководителӗсем (Патӑрйел, Йӗпреҫ, Ишлей, Турхан, Шамӑршӑ т.ыт.те) ҫулйӗр ӗҫне тивӗҫлӗн хак памаҫҫӗ, ӗҫ хӑй тӗллӗн пулса пырасси ҫине шанса лараҫҫӗ. Ҫавӑнпа вӑл районсенче плана тултарасси ҫав тери йапӑх пыраť. Патӑрйел районӗ ҫурҫулхи плана 3,5 процент, Йӗпреҫ—3,6 процент, Ишлей — 4,9 процент тултарнӑ. Плана тултарнӑ районсем ҫук. 11 район 10 процентран 15 процента ҫитиччен, икӗ район (Ҫӗмӗрлепе Йелчӗк) 20 процентшер пурнӑҫланӑ.

Республӗкре ҫулйӗр строительствинче ӗҫлеме 933 бригадӑ организациленӗ. Анчах, калас пулаť, бригадӑсенчен чылайӗшӗ хут ҫинче ҫеҫ шутланса тӑраҫҫӗ. Кӗҫӗн Кипекпе Нураса каймали ҫул (Варнар р.) йӗркерен тухнӑ, анчах йусакан ҫук, ҫула ӳтукламанни те уйӑх ытла иртрӗ ӗнтӗ. Туҫи Мӑратпа Ҫавалкас йалӗсем хушшинче те ҫулсем тумхахланса кайнӑ. Ҫӗрпӳ районӗнчи Буденный йачӗпе таракан колхозра ку таранччен ҫулйӗр бригади те организацилемен.

Ҫулйӗр ӗҫӗнче лайӑх ӗҫлекен колхозсем, лайӑх ӗҫлекен ҫулйӗр бригадисем пур. Сӑмахран Тутаркас районӗнчи Жданӑв йачӗпе таракан колхоза илер. Колхоз ҫулталӑкри ҫулйӗр строительстви планне пур ӗҫсем тӑрӑх та РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кунӗ тӗлне тултарчӗ. Уйрӑмӑнах ҫӗр чавас йенӗпе плана 200 процент, хӑйӑр турттарса хатӗрлессипе—150 процент тултарчӗ. Колхозӑн кӑҫал планпа пӑхнӑ тӑрӑх ҫулйӗр ӗҫӗнче 396 кун ҫуран, 210 кун лашапа ӗҫлемеле, халӗ вӑл 993 кун ҫуран, 250 кун лашапа ӗҫленӗ. Ҫул ҫинче ӗҫлеме йатарласах бригадӑ организациленӗ. Бригадӑра 12 ҫын, вӗсен 2 лаша. Кашнийех ӗҫре пӗрлӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӗҫрен йулни никам та пулман. Канмали вӑхӑта та лайӑх иртереҫҫӗ, кӗнеке, хаҫат вулаҫҫӗ, калаҫусем туса иртереҫҫӗ.

Анчах районсенчи ҫулйӗр пайӗсенче ӗҫлекенсем ҫакӑн пек паха опытсене ытти колхозсене ҫитерессипе, пур колхозсене те ҫакӑн пек лайӑх тӑвассишӗн питӗ йапӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем малта пыракан бригадӑсемпе стахановҫӑсене пӗлмеҫҫӗ. „Районӗпе ҫулйӗр ӗҫӗнче миҫе стахановӗҫ?“—тесе ыйтсан, чылай руководителӗсем: „Учота илейменӗр, калама пултараймастпӑр“, теҫҫӗ. Ӑмӑртӑва та ку таринченех пуҫарса йаман, пурӗ те 4 район ҫеҫ ӑмӑрту догаварӗсем тунӑ.

Республӗкри ҫулйӗр управленийӗпе районсенчи ҫулйӗр пайӗсем ҫинче пысӑк ответлӑх тӑраť. Весен ытлӑрах вырӑнсене тухса ҫӳресе, конкретлӑ йертсе пымала, тимлӗн ӗҫлемеле.

Ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ—тӑрӑшса ӗҫленинче

Епӗ ҫулйӗр бригадирӗ пулса виҫӗ ҫул ӗҫлетӗп. Ҫак хушӑра ҫулйӗр ӗҫне лайӑх вӗренсе ҫитрӗм. Ку тӗлӗшпе тӗрлӗрен кӗнекесем вулани мана пысӑк пулӑшу пачӗ.

Ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ—йуратса, тӑрӑшса ӗҫленинче, ӗҫе лайӑх йӗркеленинче. Ӑна епӗ хамӑн бригадӑ ӗҫӗнче те лайӑх куратӑп. Кӑҫал манӑн бригадӑн 60 кубла метр вӑрман касса турттармала, 200 кубла метр хӑйӑр хатӗрлемеле, 50 метр тӑршшӗ торцовкӑ сармала тата 75 кубла метр ҫӗр чавмала пулнӑ. Ку плана епӗр РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйлас кун тӗлне пурнӑҫа кӗртрӗмӗр.

Бригадӑ членӗсем пурте ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӑмӑртса ӗҫлени—лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантараť. Бригадӑ членӗсем кашнийех нормӑна ытлашшипех тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Уйрӑмӑнах М. Тойбарцӑвӑ йулташ пур ӗҫре те малта пыраť. Вӑл пӗр кун та ӗҫрен йулман, ӗҫлеме ирех тухаť.

Манӑн бригадӑра пӗтӗмпе 12 ҫын тата икӗ лаша. Ӗҫ йӗркелӗ пулса пытӑр тесе, кашни ҫынна уйрӑм ӗҫ панӑ. Пурте вӗсем ҫула лайӑх, йап-йака тытса усрассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ.

Пирӗн икӗ километр тӑршшӗ ҫула пӑхса тӑмала. Вӑл пирӗн хаљхи вӑхӑтра пур йенчен те аван. Бригадӑ членӗсем ҫул ҫинче путӑк-лапкашкалӑ вырӑн пулсанах йусаҫҫӗ.

Малашне те епӗр хамӑр участокри ҫула лайӑх тытса усрассишӗн тӑрӑшса ӗҫлеме пулатпӑр.

Тутаркас районӗнчи Жданӑв йачӗпе тӑракан колхозӑн ҫулйӗр бригадирӗ—М. Архангӗлский.

Хавасланса ӗҫлетпӗр

Епӗр, Хӳрӑн Кӑкшӑмӑри (Варнар р.) „Красноармеец“ колхоз колхозникӗсем, хамӑр ҫулйӗр участокне лайӑх тытса усратпӑр. Кӑҫал ҫул хӗрринчи йурӑхсӑр кураксене тасатса, тӳрӗ мар вырӑнсене йакатса тухрӑмӑр.

Пирӗн участокӑ ҫумӗнче—Чаламкӑкшӑмри Сталин йачӗпе тӑракан кӑлхоз участки. Анчаť ку колхоз колхозникӗсем ҫулсене йусама тытӑнман-ха. Вӗсен ҫулӗ ҫинче путӑк-шӑтӑклӑ вырӑнсем сахал мар, кӗперсем те ҫӗмрӗк.

Н. Йефимӑв.

Н. ЉАХӐВ

Китайри вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа ҫулталӑк иртрӗ

1937 ҫулти ийулӗн 7-мӗшӗнче Марко Поло кӗперӗ ҫинче, Љукоуцзйао патӗнче, Бейпин районӗнче Йапони пӑшалӗсемпе тупписем провокаци туса пеӗ сасӑсем кӗрлесе кайрӗҫ. Ҫапла пуҫланнӑ Йапонин Китай халӑхне хирӗҫ пыракан вӑрҫи.

Иртрӗ пӗр ҫулталӑк. Йапони захватчикӗсем тӑрӑшнипе вӑрҫӑ ситуацийӗ кунсеренех тарӑнала кайса пычӗ, вӑл „вырӑнти инцидентран“ (ҫапла калана ун ҫинчен йапонӗцсем чи пуҫламӗшӗнче) йӑвӑр тата вӑрӑма тӑсӑлакан ҫапӑҫу пулса тӑчӗ, вӑл ҫапӑҫу фрончӗ темиҫе пиншер километра тӑсӑлаť.

Вӑрҫӑ пуҫланӑ чух Йапони империалисӑмӗ вӑл пайанхи пек анлӑн сарӑлса кайасса шутламан. Вӑл Китай ӗмӗрех сапаланчӑк пулни ҫине, Китайри пуҫ пулса тӑракансемпе милитариссем хушшинчи сутӑнчӑк елементсем ҫине шанса тӑнӑ. Китайра анлӑн сарса йанӑ Йапони шпионажӗ ҫине (вӑл шутах Китайри троцкиссем те кӗреҫҫӗ) шанса тӑрса, агрессӑрсем кӗске срукра тата сахал вӑй хурсах хӑйсен тӗллевӗсене пурнӑҫа кӗртме—Китайӑн ҫӗнӗ территорийӗсене татса илме, ӑна пайӑн-пайӑн ваклаза уйӑрма, Китай хӑйне уйрӑм государствӑ пулса тӑнине пӗтерсе лартма шутланӑ.

Ҫавӑн пек шутланӑ, анчах чӑнчӑн пурнӑҫ урӑхла иккенни палӑрчӗ.

1934 ҫулта хӑйӗн XVII-мӗш партсйесра тунӑ отчотлӑ докладӗнче Сталин йулташ, буржуалӑ политиксен ҫӗнӗ империалисӑмлӑ вӑрҫӑ организацилес ӗҫри планӗсене ҫутатса парса, Китай—ҫав йут ҫӗрсене туртса илме хатӗрленӗ плансен обйекчӗ пулса тӑраť, тесе кӑтартса пачӗ. Агрессӑрсен шухӑшӗпе,—тесе кӑтартса панӑ Сталин йулташ,—Китайа государствӑ тесе калама йурамасť, вӗсен шухӑшӗпе Китай „организациленмен территори“ кӑна. Сталин йулташ ҫакна асӑрхаттарса хӑварчӗ: Китайа ҫыхлантарса йама хатӗрлекен вӑрҫа, XIX-мӗш ӗмӗрте Италипе Германире пулнӑ пекех Китай хӑй никама пӑхӑнса тӑрас марришӗн кӗрешмели вӑрҫӑ пулса тӑма пултараť, терӗ.

Сталин йулташ прогнозӗ пӗтӗмӗшпех тӗрӗс пулчӗ.

Патриотисӑм тата пусмӑрҫӑсен хирӗҫле курайманлӑх туйӑмӗсем,—Китай халӑхӗнчи ҫак туйӑмсене путарса лартасшӑн тӗрлӗ тӗслӗ империалисла захватчиксем ҫӗр ҫул хушши тӑрӑшнӑ,—хаљ пӗтӗм вӑйхалӗпе вӑранса ҫӗкленчӗҫ, нумай мӗлйунлӑ халӑха пӗр ҫӗре пӗрлештерчӗҫ. Паттӑр Китай халӑхӗ организациленсе пӗрлӗхлӗ наци фрончӗ туса хучӗ, хӑйӗн тӑван ҫӗршывӗ никама пӑхӑнса тӑрас марришӗн таткла кӗрешӗве тухрӗ.

Ҫӗршывра патриотисӑм вӑйлӑн ҫӗкленнине кӑтартса паракан фактсем ҫинчен Китайри тата урӑх ҫӗршывсенчи хаҫатсем нумай ҫыраҫҫӗ. Темиҫе ҫамрӑк ача 8-мӗш ҫар речӗсене кӗнӗ. Вӗсенчен пӗри, хӑйне чарса тӑма хӑтланнӑ амӑшне ҫапла каланӑ: „Анне! Вӑрӑ-хурахсем пирӗн пӳрт алӑкӗ умӗнчех. Хаљ суйласа илмели пӗрре ҫеҫ—йе ҫапӑҫмала, йе чура пулса тӑмала“. Пуйан ҫемйесенчи ҫамрӑксем те, вӗсем те хӑйсен ирӗкӗпе ҫара кайаҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри хӑй ҫара кайни ҫинчен килтисене ҫапла пӗлтерсе хӑварнӑ: „Хаклӑ аттем, епӗ хам атте-анне йуратнӑран мар, хам ҫӗршывӑма тата ытларах йуратнӑран кайатӑп“.

Сучжоура пӗр хӗрарӑм хӑй упӑшкине полицийе тыттарса йанӑ, мӗншӗн тесен ун упӑшки Китайӑн ҫар пуйӑсӗсем куҫса ҫӳрени ҫинчен йапонӗцсене пӗлтерсе тӑнӑ. Хӗрарӑм малтан упӑшкине ӳкӗтлесе пӑхнӑ, сутӑнчӑклӑ ӗҫе пӑрахма ыйтнӑ. Капла туни пулӑшманнине курсан, вӑл шпион ҫинчен влаҫсене пӗлтернӗ, вара шпиона персе пӑрахнӑ. Кайран кӳршисем хӗрарӑмран: упӑшкуна шеллетӗн и есӗ, тесе ыйтнӑ. Хӗрарӑм йаланах ҫакӑн пек ответ панӑ: „Ҫук, епӗ предател-упӑшкана ҫухатрӑм, анчах ҫапла тунипе хамӑн ҫӗршыври нумай граждӑнсене хӑтартса хӑвартӑм“.

Империалиссен киревсӗр ӗҫӗсемпе тата хӑй ҫӗршывӗнчи милитариссен пӗр-пӗрин хушшинчи кӗрешӗвӗсемпе суранланса пӗтнӗ Китайӑн, паллах, вӑрҫӑ пуҫламӗшӗнче вӑйлӑ, пӗрлӗхлӗ ҫар, хаљхи вӑхӑтра мӗн кирлине пӗтӗмӗшпех тума пултаракан ҫар пулма пултарайман. Шӑпах ҫакӑн ҫине шанса тӑнӑ та ӗнтӗ Йапони агрессӑрӗсем. Анчах Китай халӑхӗн чӑн-чӑн хӑвачӗ, унӑн пӗтӗм нацилӗ пӗрлешӗвӗ—Китайри компарти пуҫарнипе ҫуралса тухнӑ пӗрлешӗвӗ, вӑрҫӑ пынӑ вӑхӑтрах ҫара ҫӗнӗле йӗркелеме, ӑна вӑйлатма тата хӗҫпӑшаллантарса ҫитерме, уйрӑм отрйадсене пӗрлештерсе тӑшмана ҫапса ҫӗмӗрекен хӑрушӑ вӑй туса хума май пачӗ.

Пин ҫул ытла ӗлӗкрех Китайӑн сурҫӗр йенчи чиккисем тӑрӑх аслӑ стена тунӑ, вӑл стена Китайа тӑшмансем тапӑнса кӗресрен хӳтлесе тӑнӑ. Темиҫе пиншер километра тӑсӑлакан ҫак стена авалхи вӑхӑтсенче Китайӑн никама пӑхӑнас марлӑхне сыхласа тӑнӑ, анчах вӑл кучӑхнехи империалиссен самољочӗсемпе танкӗсене хирӗҫ тӑма пултарайман. Ӑна Китай халӑхӗ лайӑх ӑнланса илнӗ. Хаљхи Китайӑн кӗрешӳ йуррисен хушшинче пӗр йурӑ пур, вӑл йурӑра ҫапла каланӑ: „Кам чура пулас мар тенинисем пурте кӗрешӗве ҫӗклемӗр; ҫурӑмпа ҫурӑм пӗтӗҫсе тӑрар та, чӗрӗ Аслӑ стена туса хурар“. Пулса иртнӗ событисем ҫакна кӑтартса пачӗҫ: ҫӗршыв никама пӑхӑнса тӑрас марришӗн кӗрешекен паттӑрсен чӗрӗ стенине вӑрҫӑ техникин кучухнехи средствисем те ҫӗмӗрме пултарайманни палӑрчӗ; вӑл техникӑ ҫине Йапони агрессӑрӗсем тем пекех шанса тӑнӑ.

Китайри вӑрҫӑ темиҫе тапхӑр урлӑ иртрӗ. Вӗсенчен пӗр тапхӑрӗнче йапонӗцсем Нанкина илчӗҫ. Йапони генералӗсем Нанкинра вӑрҫӑ пӗтнине уйавлама хатӗрленнӗ, вӗсем столицӑна ҫухатнипе Китай пуҫне тайӗ, парӑнӗ тесе шутланӑ. Анчах чӑннипе илсе пӑхсан, Йапони ҫарне Нанкин патӗнче пысӑк ӑнӑҫсӑр ӗҫ пырса лекнӗ. Йапони командӑванийӗ, Нанкина ҫисрах туртса илме ӗмӗтленсе, хӑй ҫарӗсене пӗр чарӑнса тӑма, канма памасӑр, кирлӗ йапаласем вӑхӑтлӑ парса тӑмасӑр, малала хӑваланӑ.

Йапонин наступлени туса пыракан колонисем Нанкин патӗнче Китай ҫарӗсене йӗри-тавра хупӑрласа илӗҫ те ӑна пӗрре ҫапсах тӗтӑкла ҫӗнтерӳ тӑвӗҫ, тесе шутланӑ Анчах Китай ҫарӗ кайала организациленӗ чакса, тӑшмана хирӗҫ ӑнӑҫлӑн ҫапӑҫса пынӑ.

Китай ҫарне ҫавӑрса илесси пулман. Китай ҫарӗсем Йанцзы йухан шывӗн тепӗр йенне чакса каҫнӑ, а „ҫӗнтернисем“ калама ҫук ҫӳленсе ҫитнӗ, вӗсен уйӑхӗ-уйӑхӗпе тӑрӑшса хӑйсене тирпейлемеле пулса тӑнӑ. Ҫак тапхӑртан пуҫласах Йапони ҫарӗсем ҫапӑҫури пултарулӑхӗ йӑвашланнӑ, вӗсенче дисциплинӑ пӗтме пуҫланӑ, туртса илнӗ районсенче ҫаратасси, ҫӗмӗрсе ҫӳресси пуҫланнӑ.

Вӑрҫӑн малтанхи ултӑ уйӑхӗнче пӗр чарӑнса тӑмасӑр наступлени туса пырса Йапони ҫарӗ пысӑк тӑкаксем тунӑ. Чӑнах та йапонӗцсем пысӑк территори туртса илнӗ, анчах вӑл вӑрҫӑ пӗтесси патне пӗр утӑм та ҫывхартман.

Вӑрҫӑн иккӗмӗш тапхӑрӗнче ҫапӑҫакан вӑйсем малтанхи тапхӑртинчен чылай улшӑннӑ.

Нанкин патӗнче „ҫӗнтернӗ“ хыҫҫӑн йапонӗцсен наступленинче вӑрӑм перерыв пулнӑ вӑхӑтра Китай нумай вӑхӑт ҫине тӑрса кӗрешмешкӗн ҫӗнӗле йӗркеленнӗ. Ҫӗнӗ дивизисем туса йӗркелесси пуҫланнӑ, партизанла кӗрешӳ анлӑн сарӑлса кайнӑ, ҫарсене централизацилӗ йӗркепе тытса пырассине ӗҫе кӗртнӗ. Ҫар речӗсенчи предателсене, йапонӗцсем майлӑ ӗҫленӗскерсене пӗтереҫҫӗ, пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх Йапони шпионӗсене хирӗҫ, фронтри тата тылри йапун-троцкисла агентурӑна хирӗҫ кӗрешесси сарӑлса кайаť.

Йапонӗцсем ҫӗнӗрен наступлени тума хӑтланса пӑхсан, вӗсем вӑйлӑн хирӗҫ тӑракан Китай ҫарӗсемпе тӗл пулаҫҫӗ. Пирвайхи операцисен опытне шута илсе, Китай ҫарӗ сыхланаť кӑна мар, хӑй те наступленисем тума тытӑнаť. Китай ҫарӗсем ҫӗнӗле йӗркеленнине пит уҫҫӑн кӑтартса паракан факт вӑл—апрел пуҫламӗшӗнче Йапони ҫарӗсене Тайерчжуан патӗнче аркатса тӑкни пулса тӑраť. Ӑслӑ маневрсем туса Китай ҫарӗсем Йапонин икӗ дивизине йӗри-тавра хупӑрласа илнӗ, вӗсен чи пысӑк пайне тӗппипех пӗтернӗ.

Йапони чаҫӗсене ҫӗнӗ вӑйсем йарса хытӑ тӗреклетеҫҫӗ, вара вӗсем май уйӑхӗн варринче Ҫуйчжоу ҫине наступлени тума тытӑнаҫҫӗ. (Ҫуйчжоу—Тйанцзињ-Пукоу чукунҫулӗпе Љунхай чукунҫулӗ пӗр-пӗрин урлӑ каҫнӑ ҫӗрте вырнаҫса тӑраť). Ҫуйчжоуна туртса илсе Йапони ҫарӗн Ҫурҫӗр Китай тата Шанхай районӗсенчи сапаланчӑк фронтсемпе пӗрлештӗрмеле пулнӑ. Йапони командованийӗ, Нанкин патӗнче пулнӑ пекех, Ҫуйчжоу операцинче те Китай ҫарне йӗри-тавра хупӑрласа илсе пӗтерсе лартма планласа хунӑ пулнӑ. Анчах Китай ҫарӗ, йапонӗцсем Ҫуйчжоу патӗнче пытарма ӗмӗтленнӗскер, парӑнма шухӑшламан та. Йапони тупписем Ҫуйчжоу стенисем ҫине персе тӑнӑ вӑхӑтра Китай самољочӗҫем Йапонин вӑтаҫӗрти пайӗ тӗлне пырса тухаҫҫӗ. Хӑйсен тӑшманӑн тискерлӗхне, вӑл Китай тӗлӗнчи мирлӗ хуласем ҫине бомбӑсем пӑрахса ҫӳренине паллӑ тӑвас шутпа Китай љотчикӗсем Йапони хулисем ҫине бомбӑсем вырӑнне листовкӑсем пӑрахса хӑварнӑ. Вӑл листовкӑсем ҫине акӑ мӗн ҫырнӑ пулнӑ: „Йапонин чи лайӑх дивизийӗсен ретӗнче шутлакан Итагаки тата Исоган дивизийӗсене епӗр Тайерчжуан патӗнче пулнӑ ҫапӑҫусенче аркатса тӑкрӑмӑр. Пирӗн ҫӗршыв ҫине тӑрсах хӗҫпӑшал тытса хирӗҫ кӗрешме хатӗр иккенне Гоминданӑн йулашки вӑхӑтра пулса иртнӗ конгресӗ тата тепӗр хут паллӑ турӗ. Йапони империалисӗсем пире пусмӑр айне тумашкӑн мӗн тери ҫине тӑрӗҫ, ҫав таранах епӗр таччӑн пӗрлешсе ҫӑмӑртанапӑр“.

Ҫуйчжоу парӗнчӗ, анчах Йапони „наполеонӗсен“ ҫитӗвӗ, Нанкин патӗнчи пекех, каламалӑх та ҫук пӗчӗккӗ пулчӗҫ. Хупӑрласа илнӗ ҫӗртен Китай ҫарӗсем ҫӗнтерӳлӗн тухрӗҫ.

Ҫуйчжоу патӗнчи операци ӑнӑҫсӑр пулни Йапони захватчикӗсене ҫӗнӗ наступленисем сарса йама хатӗрлет. Хаљ вӗсем Ханькоу хулине, Йанцзы йухан шывӗ хӗрринчи економикӑлӑ, административлӑ пысӑк центра туртса илме хатӗрленеҫҫӗ. Кунта йапонӗцсем халиччен уйрӑмах паллӑ ҫитӗнӳсем тӑвайман-ха. Йапони десанчӗсене Китай чаҫӗсем пӗтерсе пыраҫҫӗ, сыранри

(Йулашки 4-мӗш страницӑра)

Китайри вăрçă пуçланнăранпа çулталăк иртрĕ

(ЙУЛАШКИ)

оборонă тата шыва пӳлсе хунисем, карапсене малала кайма чарса тăраççĕ. Ийунĕн иккĕмĕш çурри уйăхĕнче Китай самољочĕсем кашни кун тенĕ пекех Йапони карапĕсем çине пырса бомбăсем пăрахаççĕ, хăйсем пĕр тăкак курмасăр, вĕсем Йапонинне 30 карап ытла стройран кăларнă.

Хањкоуна çурçĕр тата хĕвелтухăç йенчен Китай оборонин шанчăклă позицийĕсем хӳтлесе тăраççĕ. Пулас наступленире йапонĕцсен пысăк вăй хумала тата сахал мар тăкак курмала пулаť.

Вăрçă пуçланнăранпа пĕр çул хушшинче йапонĕцсен вилсе тата аманса 300 пин çын ытла стройран тухнă. Хаљ мĕлйун çурă ытла йапонĕцсене пăшал тыттарса тăратнă. А „çитĕнӳсем" мĕнле? Чăннипе илсен — çук вĕсем. Китайран туртса илнĕ калама çук пысăк территори çийелтен пăхма çеç йапонĕцсен аллинче. Вăл районсенчи чăн-чăн хуçа—халиччен пекех Китай халăхĕ. Çавăн пек районсенчен пĕри Çурçĕр Китайра. Вăл район Хебей провинцин çуррине тата Шањсипе Чахар провинцисен чылай пайĕсене йышăнса тăраť, вĕсем йапонĕцсен аллинче пек шутланаççĕ. Анчах вăл районăн правителстви унти халăхăн пурнăçне кирлĕ пек йĕркелĕн илсе пыраť, Китайăн тĕп правителствипе радио тăрăх çыхăну тытса тăраť. Вăл районри хĕçпăшаллă отрйадсенче 50 пин çын шутланаť, вĕсем района хуралласçĕ тата йапонĕцсене шалала кĕме чарса тăраççĕ. Вĕсем винтовкăсемпе, пулеметсемпе, гранатăсемпе хĕçпăшалланнă. Вăл хĕçпăшалсенчен чылай пысăк пайне йапонĕцсенчен туртса илнĕ.

Вăл района тӳррĕмех 8-мĕш револљуцилĕ халăх çарĕ пулăшнипе организациленĕ. 8-мĕш çарăн чаçĕсем йапонĕнсем йышăннă фронт урлă ирĕклĕнех куçса çӳреççĕ, мĕншĕн тесен йапонĕцсен талкĕшпех сарăлса тăракан фронт çук. Йапонĕцсем чукунçул станцисене тата халăх пурăнакан шултăра пунктсене кăна йышăнса тăраççĕ. Вĕсен хушшинче пысăк территорисем ирĕклĕ сарăлса выртаççĕ, вĕсене алла илмешкĕн йапонĕцсен вăй çук.

⁂

Çакăн пек ĕнтĕ фронтри лару-тăру. Çĕршывра шалта та ĕçсем лайăхах мар. Економикăри йăвăрлăхпа пĕрлех Йапонире вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем ӳссе пыраççĕ, социаллă хирĕçӳсем çивĕчленсе пыраççĕ. Çакна хирĕç вара çĕршывăн пуçлăхĕсем „мораљлĕ вăйсене мобилизацилес" кампани сарса йанă. „Мораљлĕ мобилизаци" мартра йышăннă саккув тăрăх пулса пыраť, вăл саккуна çĕршыври пĕтĕм вăйсемпе ресурсăсене вăрçă ваљљи мобилизацилесси çинчен кăларнă. Çар министерствин брошӳри, çĕнĕ саккув мĕне пĕлтернипе халăха ăнлантарса парас шутпа кăларнăскер, „мораљлĕ мобилизаци" задачисем çинчен пит те уççăн каласа параť. Вăл задачăсем пĕтĕм халăх ваљљи (шкул ачисенчен пуçласа) полицилĕ режим туса хурасси, забастовкă тăвакан рабочисене тискеррĕн çĕмĕресси.

Çак хисеплĕ обйазăннăçсене ăнаçлăн пурнăçламашкăн иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче шалти ĕçсен министрне Суецугу адмирала, тинĕс офицерĕсем хушшинчи фашисла елементсен лидĕрне лартнă. Çутĕç министерствине кăçалхи май уйăхĕнчен пуçласа Араки генерала, хĕçпăшаллă вăйсен типĕ çĕр çинчи чаçĕсенчи фашисла пуçлăхне шанса панă. „Мораљлĕ мобилизаци" пуçĕнче тăракансен дуечĕ çакăн пек ĕнтĕ.

Фронтсенче Китай çарĕн вăйхалне тутăнса пăхнă хыççăн, Йапонири влаçра тăракан ушкăн çĕршыври халăха тӳсме чĕнет, вăрăма тăсăлас вăрçăра чăтăмлă пулма чĕнет. Китайа çиçĕм пек хăвăрт пĕтерсе лартма сăмах панисенчен мĕн тери айакра ĕнтĕ ку! Китай халăхĕ агрессăрсене ирĕксĕрех тăна кĕртрĕ, хăй çинчен чăнласах шухăшлама вĕрентрĕ тата хăйсен нацийĕ никама пăханас марришĕн таса кĕрешĕве тухнă чух пусмăрти массăсем мĕнле никам çĕнтерейми вăй пулса тăма пултарнине кăтартса пачĕ.

Китайри вăрçă

Вăтаçĕрти Китайра, Цзйанси провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем Хукоуран хĕвелтухăç йеннерех чылай пунктсем туртса илнĕ хыççăн, Йанцзы йуханшывĕ тăрăх çурçĕр-хĕвелтухăç йеннеле куçса пыраççĕ. Китай çарĕсен уйрăм отрйачĕсем Йанцзыран çурçĕр йенче наçтуплени тăваççĕ. Пынцзерен хĕвелтухăç йеннерех çапăçусем пыраççĕ.

Ийулĕн 6-мĕшĕнче Шанхайа Йапонин пилĕк çар карапĕ, Китай самољочĕсем хытă сийенленĕскерсем, пырса çитнĕ, вăл шутран пĕри—авианосĕц. Çав авианосĕц çинче Йапонин вăтăр çĕмрĕк самољочĕ пулнă.

Çурçĕр Китайра Шањси провинцинче Йапони командăванийĕ талкишпех наступлени пуçлама хатĕрленет, унта 40 пин ытла Йапони салтакĕсене пухса тăратнă. Хаљхи вăхăтра йапонĕцсем провинцин кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи Йанчен хули çине наступлени туса пыраççĕ. Шањсин кăнтăр-хĕвеланăçĕнче йапонĕцсем каллех вĕлерекен газсем йанă.

Шањдун провинцинче Китай партизанĕсем халиччен пекех кĕрешеççĕ. Ийулĕн 4-мĕшĕнче вĕсем Йуњченпа Изӳйе хулисене (Цзининран хĕвеланăç йеннеле) туртса илнĕ.

Бейпин районĕнче партизансем пит те активлăн кĕрешеççĕ.

Йапонĕцсем Кăнтăр Китайа çĕмĕрсе кĕрес хăрушлăх тухса тăнине кура, халăха Йапони захватчикĕсене отпор пама хатĕрлес тĕлĕшпе Гуандун провинцинче пысăк ĕçсем туса иртереççĕ. Оборонă ваљљи хĕçпăшаллă корпуссем организацленĕ. Çĕр пин призывник çар ĕçне вĕренсе пĕтернĕ, вĕсене Кантона сыхлакан уйрăм отрйадсем туса организациленĕ. Призывниксен тепĕр партине çар ĕçне вăйлĕн вĕрентеççĕ. Кантонри рабочисем мобилизаци комитечĕ тунă, вăл комитет рабочисен çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе тумали пĕтĕм ĕçсене пĕрлештерсе тăраť, предателсене хирĕç кĕрешет, çавăн пекех тата пропагандăлă ĕçсем те туса ирттерет.

(ТАСС).

„ТЕМП" СТАДИОНĔНЧЕ

Шупашкар „Темп" спорт обшчĕствин стадионĕнче час-часах футбол матчĕсем пулса иртеççĕ. Футбол вăййине курма хулари ĕçхалăхĕ пит нумай пухăнаť.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сулахайра—ийунĕн 30-мĕшĕнче „Динамо" тата „Буровестник" командисем выљанин пĕр саманчĕ. Малта Блинов йулташ („Темп" обшчествăн футболисĕ, „Буровестникшăн" выљанă),—вăл çав кун „Динамо" командин алăкне 4 мечкĕ тапса кĕртнĕ. Сылтăмра—выљанине куракансем.

Г. Харлампийĕв фото-ӳкерчĕкĕ.

Чан Кай-ши сăмахĕ

Йапонипе Китай хушшинчи вăрçă пуçланнăранпа çулталăк çитнĕ май Китай правителствин пуçлăхĕ Чан Кай-ши Францин хаçачĕсем çинче çапла çырса кăларнă:

„Китайăн малашлăхĕ, — тесе кăтартса панă Чан Кай-ши,—нихăçан та хаљхи пек нумай шанчăклă пулман. Китайăн пĕрлĕхĕ —тăшман çĕмĕрсе тăкма хăтланнă пĕрлĕх, хаљхи вăхăтра питĕ çирĕп. Çарсене хĕçпăшаллантарнинчи уйрăмлăх,вăрçа кирлĕ пек лайăх хатĕрленмесĕр тытăнни пире чăрмантармарĕ, Йапонине „çĕнтерме çук" текен халлапа епĕр çапса салатрăмăр. Китай халăхĕ хăйĕн нацилĕ ĕçĕшĕн мĕн тери çине тăрса та паттăрăн кĕрешнине паллă тăвас пулаť; ку вăл, манăн шутпа, пирĕн çĕнтерӳшĕн тĕп вырăнта тăраканни. Епĕр хамăрăн вăйсене сыхласа хăварас тесе, чылай хуласемпе йалсене пăраха-пăраха хăвартăмăр. Анчах вăрçăн пирвайхи çулĕн вĕçĕнче епĕр икĕ хут вăйлăн, икĕ хут çине тăрса тăшмана хирĕç кĕрешетпĕр. Йапони çарĕсем пирĕн территори çинчен тасаличчен епĕр кĕрешме чарăнмастпăр".

(ТАСС).

Германи Швейцари çине тапăнма хатĕрленет

ПАРИЖ, ийулĕн 6-мĕш. Францири хаçатсем Базелрен килекен телеграммăсене пичетлесе кăлараççĕ, вăл телеграммăсенче пĕлтернĕ тăрăх, Швейцарири влаçра лараканcем Гитлĕр Германийĕ Лихтенштейн књажĕствине туртса илме пултарасси çинчен самайах шухăшлаççĕ.

Швейцарири социалиссен хаçачĕ „Травай" çапла çыраť: Германин политикăри тата çар ĕçĕнчи дейателĕсем Лихтенштейне „инспектăрласа" тăраççĕ, тет. „Травай" сăмахĕсем тăрăх, Германи фашисăмĕн Лихтенштейнри планĕсем—пĕтĕмĕшпе Швейцарине хирĕç плансем, вăл плансене стратегине шута илсе тунă. Германи Рейн шывĕ хĕрринче хăйĕн çарне тытса тăрасшăн, вăл Рейн айлăмĕнче Швейцари тума тăрăшакан çирĕплетнĕ вырăнсен сывăхĕнче хăйĕн батарейĕсене лартса тухасшăн,—тесе çыраť „Травай". Çак плансем ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех Германи Швейцари нейтралитечĕ çинчен каланине хирĕç пыраççĕ.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Левант фронтĕнче, Михарес йуханшывĕн сылтăм çыранĕн районĕнче, Теруелтен кăнтăр-хĕвелтухăç йеннели вырăнта республикă çарĕсем пăлхавçăсене хирĕç вăйларан та вăйлăрах кĕрешеççĕ. Вăл районра укрепленисем тунипе республикăнĕçсем наçтуплени тăвакан пăлхавçăсене вăйлă отпор парса тăма пултараççĕ.

Йулашки 8 кун хушшинче пăлхавçăсен çарĕсем Бечипе Онда хушшинче (Кастељонран кăнтăр хĕваланăç йеннерех) пысăк вăйсем пухаççĕ. Кунта та республикăнĕçсем фашиссене малала кайма чарса лартнă.

Фронтăн хĕвеланăç пайĕнче республикăнĕçсем фашиссен пур атакисене те çĕмĕрсе тăкнă тата Артана Санта Барбарапа Виљйавиехаран кăнтăр йеннели районра (Теруелтен кăнтăрала) пăлхавçăсем малала куçса пырассине чарса лартнă.

⁂

Ийулĕн 6-мĕшĕнче Левант фронтĕнче пулнă сывлăшри çапăçура республикă авиацийĕ Италин икĕ самољотне персе антарнă.

Çав кунах фашиссен авиацийĕ Пусољ районĕнче Барçелонăран Валенçийе каякан çул çине бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем пур. Барселонă порчĕн районĕ çине, Сан-Андриан тата Бадаљонă районĕсем çине нумай бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пурте тинĕсе ӳкнĕ.

(ТАСС).

Колхозсем кирпĕч тăваççĕ

250 ПИН КИРПĔЧ. Аслă-Чакри (Вăрмар р.) Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз кирпĕч тума пуçларĕ. План тăрăх кăçалхи çура унăн 250 пин кирпĕч тата 80 пин черепицă тумала. Колхозниксем ку плана ытлашшипех тултарма пулчĕç. Пайанхи куна 50 пин кирпĕч туса кăларнă та ĕнтĕ.

Анчах колхоз правленийĕ ĕçре кирлĕ йапаласене пурне те хатĕрлесе çитерейменха, машинăна сĕрмели çу çук, черепицă сарайĕ пĕчĕккĕ.

В. АНДРИЙАНĂВ.

СТАХАНАВĔЦСЕН ЙЫШĔ ӲСЕТ. Улăх-Шăматри колхозра (Йетĕрне р.) кирпĕч тăвас çĕрте ĕçлекенсем хушшинче стаханăвĕцсен йышĕ ӳссех пыраť. Уйрăмăнах йулашки вăхăтра Д. Никандрăв, М. Никитин, П. Дормидонăвă, Йе. Дмитрийĕвă йулташсем паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕç, кашни кунах вĕсем кирпĕч тăвас плана 200—230 проц. тултарса пыраççĕ.

Колхозăн кăçал 80 пин штук кирпĕч тумала. Ку шутран çурри ытла вырăнти вăтам шкула тунă çĕре каймала.

С. РЙАБИНОВСКИЙ.

Виççĕмĕш колхоз театрĕ

ЙЕТĔРНЕ. Чăвашсен виççĕмĕш колхоз театрĕ вырăссен паллă драматургĕ Билљ-Белоцерковский çырнă „Пограничниксем" пĕссăпа тепĕр пысăк çĕнтерӳ турĕ. Ку пĕссăна театр Йетĕрне районĕнчи колхозсенче 19 хут, Елĕк районĕнче 22 хут лартса пачĕ, спектакљсенче пĕтĕмпе 26 500 çын пулнă. Мухтавлă совет пограничникĕсем çинчен, вĕсем фашисла разведкăсен шпионĕсене тытса тăрă шыв çине кăларнине кăтартакан пĕссăна колхозниксем пур çĕрте те пысăк йуратупа йышăнса илеççĕ.

Хаљ театр çак пĕссăпах Тутаркас районне пĕр уйăхлăха тухса кайаť.

В. Михайлăв.

Саслă кино—колхозра

КУСЛАВККА. Чăрăшкасси йалĕнче „За советскую родину" йатлă саслă кино-картинă кăтартрĕç. Кино курма 650 çын пухăннă. Пурте калама çук пысăк хавхаланупа курса ларчĕç. Малашне те час-часах саслă кино-картинăсем килсе кăтартма сĕнӳсем пачĕç.

А. Турнов.

Учителсем канмали çуртра

Пединститутăн заочнă вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен çектăрĕ ийулĕн 6-мĕшĕнче заочник-студентсенчен 100 çынна пĕр кунлăх путевкăсемпе учителсен канмали çуртне йачĕ.

Заочник-студентсем кунта канмали куна пит лайăх иртерчĕç. Пединститут преподавателĕ Гуçев йулташ пĕтĕм тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем çинчен лекци вуласа пачĕ.

Çитес канмали кун, ийулĕн 12-мĕшĕнче заочниксем каллех учителсен канмали çуртне кайаççĕ.

АРК. НЕÇТЕРĂВ.

Пулни-иртнисем

АРĂМНЕ ВĔЛЕРЕКЕН. Вăрмањкас йалĕнчи (Вăрнар р.) йединоличник Куçма Михайлăв кăçалхи ийунĕн 12-шĕнче, „троицă" кунĕ, Çендимиркинă йалне хăнана кайнă. Унпа пĕрле арăмĕ—Ксени Михайлăвă та пынă. Хăнара Михайлăв питĕ ӳсĕр пулнă. Киле таврăннă чухне, арăмне çынсем çумне хуша кĕвĕçнипе, пĕлми пулаччĕнех хĕнĕнĕ те çул çине пăрахса хăварнă. Арăмĕ киле утса çитсен татах тепĕр хут хĕнесе урама кăларса пăрахнă.

Тепĕр кунне, ийунĕн 13-мĕшĕнче ирхине, тăн кĕнĕ хыççăн Ксени кӳршĕ çынни патне кайнă. Михайлăв унта пырса арăмне каллех пĕлми пуличчĕйех хĕнĕнĕ. Ксени Михайлăвăна çав кунах Нурăс пуљницине илсе кайнă. Унта вăл ийунĕн 20-мĕшĕнче вилнĕ. Михайлăва арĕслесе, ĕçе суда панă.

Мĕн пулса иртет Чехословакире

Фашисла Германи Чехословакине тытса илме тахçанах тăрăшаť. Чехословакире хăйне пулăшакансем пулччăр тесе, Гитлĕр унта хăйĕн агентурине—Генлейн йертсе пыракан судет-нимĕç партине туса хунă.

Çав парти ĕнтĕ Чехословакире пĕрмайăх ишĕлтерӳлĕ ĕç туса пыраť, çакна вăл фашиссен йалании ĕç майĕсемпе—терроргпа, халăхсене хăратнипе, тĕрлĕрен провокацисем тунипе тата ыт. те туса пыраť.

Германи Австрине тытса илнĕ хыççăн, генлейнăвĕцсем, Германи çарĕсем çийĕнчех Чехословакине тапăнса кĕрсе каймала тăвас шутпа, тата активлăрах ĕçлеме тытăннă.

Генлейнăвĕцсен питех те пӳтсĕр ĕçне çакăнпа ăнлантарса пама пулаť: пĕррĕмĕшĕнчен, вĕсен хыççăнче Германи çарĕ тăраť, иккĕмĕшĕнчен—Чехословаки правителстви генлейнăвĕцсен провокацийĕсене сирсе пăрахас тĕлĕшпе нимĕнле татăклă ĕçсем те туман.

Кăçалхи майăн йулашки кунĕсенче çакă паллă пулчĕ: Германи Чехословаки чикки çывăхне пысăк çарĕсем илсе пырса тултарнă. Çакăн хыççăн, халăх массисем хыттăн тăнипе Чехословаки правителстви майăн 20-мĕшĕнче çĕрле Германие хирĕç тăма йышăннă. Пĕр çулхи запасри çынсене мобилизацилени çинчен пĕлтернĕ. Германипе Чехословаки хушшинчи чиккĕне çарçем йанă. Тепĕр йенчен, Францие СССР Союзĕ çапла пĕлтернĕ: вĕсем Чехословакипе тунă договăр тăрăх, пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен илнĕ обйазателствăсене пурнăçа кĕртĕç,—тенĕ.

Çакă ĕнтĕ Германи фашисĕсене хыттăнах чăрмантарнă тата фашисла Германин пуçлăхĕсене шиклентернĕ. Гитлĕр вара хăйĕн тĕллевĕсене урăх майпа пурнăçа кĕртме йышăннă. Генлейнăвĕцсем, Гитлĕр хушнă тăрăх, чейе майсемпе ĕçлеме пуçланă. Вĕсем тавлашулă ыйтусене пĕрле татас тесе Чехословаки правителствипе каласма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ.

Пĕр уйăх кайала правителствăпа генлейнăвĕцсем хушшинче çав калаçусем пуçланнă. Вăл калаçусем Генлейн йертсе пыракан судет-нимĕç партийĕн ыйтнисем тавра тата правителствă туса хатĕрленĕ „национаљнăççен кодексĕ" тавра пулса пынă. Çак кодекс (саккув) Чехословакире пурăнакан тĕрлĕ нацисен прависемпе положенине палăртса параť.

Калаçусем пĕрмайăх вăрттăн пулса пынă, вĕсен тĕп шухăшĕсем çинчен кайарахпа çеç хаçатсем çинче пичетлесе кăларма пуçларĕç.

Чи малтанах правителствă судет-нимĕç партин ыйтнисене сӳтсе йавма тытăннă. Çав требăванисем çинчен судет-нимĕç партийĕ çак çулхи апрел уйăхĕнче пулнă сйезĕнче Генлейн тĕплĕн каласа панă. Хинчухне Генлейн çакна тума ыйтнă: Чехословаки правителствин вăл хăй пĕр-пĕрне пулăшас тĕлĕшпе тунă договăр тăрăх çыхăнса тăракан Франципе тата ССР Союзĕпе çыхăну тытма пăрахмалла, фашисла Германипе туслă çыхăну тытма пуçламала. Генлейнăн тепĕр требăванийĕ вăл—Судет-нимĕç облăçне (Чехословакин Германипе йунашар территорийĕ, унта пуринчен ытла нимĕçсем пурăнаççĕ) никама пăхăнса тăмала мар ирĕк парасси пулса тăраť. Генлейн çав облăçри влаçа нимĕçсене пама тата облăçне хăйне нимĕçсен тесе йышăнтарма ыйтнă.

Çак иккĕмĕш требăванийĕ Генлейн Чехословакире пурăнакан нимĕçсене пусмăрта тытса усраççĕ йе тата вĕсен прависене мĕнпе те пулин пĕчĕклетнĕ тенĕ сăлтавпа кăларса тăратман. Мĕншĕн тесен нимĕçсем Чехословаки республикĕнчи ытти халăхсем мĕнле правапа усă кураççĕ, вĕсем те çав правапах усă кураççĕ, кунсăр пуçне вĕсем гитлĕрла Германири нимĕçсенчен тем терийех лайăх пурăнаççĕ.

Германи фашисĕсем Пољшăра тата ытти çĕршывсенче пурăнакан нимĕçсем çине çавăрăнса та пăхмаççĕ, йут çĕршывсенчи ĕççынни нимĕçсен пурнăçĕпе вĕсем пурнчен сахалрах интересленеççĕ.

Çавăншăн кăна Гитлĕр Чехословакине тытса илме шутланă, çак тĕллевпе кăна унта пурăнакан нимĕçсем çинчен ыйту тапратнă.

Калаçусем пуçланнăнах буржуаллă правителствăсем — Англипе Франци правителствисем Чехословаки правителствине Генлейн уступкă тума хыттăнах „хушма пуçланă". Чехословакири чи реакцилĕ партисем те Генлейнпа килĕшме пăхаççĕ. Генлейнăвĕцсем, Англипе Франци пулăшнипе тата Чехословаки правителствинчи реакцилĕ шухăшлă çынсем çине тайăннипе хăйсен требăванийĕсенче ытларах та ытларах пӳтсĕрленсе пыраççĕ, вĕсем Чехословакири фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем çинчен тĕрлĕ елексем сараççĕ тата халăхсене терроргпа пусмăрласа асаплантараççĕ.

Чехословаки правителствине çĕнĕрен хĕсес тата ăна уступкăсем тутарас шутпа, генлейнăвĕцсем йулашки кунсенче тĕрлĕ провокацисемпе терророла ĕçе çĕнĕрен вăйлăн туса пыма пуçланă.

Генлейнăвĕцсем хăйсем пĕлтернĕ тăрăх та правителствăпа пуçласа йанă калаçусем „пĕр вырăнтах чарăнса ларнă".

Генлейн çĕнĕ инструкцисем илме Берлина тухса кайнă.

Германи фашисăмĕпе унăн агентури—генлейнăвĕцсем мĕн тери пӳтсĕрленеççĕ, Чехословакире халăхсен фашисăма хирĕçле фрончĕ çавăн чухлĕ ӳссе, сарăлса пыраť. Обшчественнăç хĕснипе правителствă çитес вăхăтра „национаљнăççен кодексне" сӳтсе-йавнă çĕре Чехословакири коммунисла партине—демократине тата Чехословаки халăхĕн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлес политикăна вĕçне çитиех çирĕппĕн тытса пыракан партине хутшăнтармала.

Совет Союзĕнчи ĕççыннисем Чехословакири событисене тимлĕн сăнаса тăраççĕ, вĕсем Чехословаки çине тапăнас хăрушлăх Йевропăри мире хăратса тăнине асра тытаççĕ.

(ТАСС)

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

ШУПАШКАР ТОРГНЕ

çĕр чаваккансемпе платниксем

ĕçе хăвăрт кирлĕ.

Шупашкар торгĕ.

Республикăра тухса тăракан журналсене çырăнса илĕр!

1938 çулти ийуљ уйăхĕшĕн тата малалли уйăхсемшĕн подпискă илеççĕ.

Журналсен йачĕсем (чăвашла тухаççĕ)	Уйăхра миçе хут тухаť	Çырăнса илмели хакĕ: 1 уйăха т.	1 уйăха п.	3 уйăха т.	3 уйăха п.	6 уйăха т.	6 уйăха п.
Ленин çулĕпе	2	—	50	1	50	3	—
Ĕçхĕрарăмĕ	1	—	50	1	50	3	—
Сунтал	1	1	—	3	—	6	—
Капкăн	2	—	40	1	20	2	40
Хатĕр пул	1	—	30	—	90	1	80

Подпискăна çыхăну предприйатийĕсем (почтăн хулари тата районри уйрăмĕсемпе агентсем), почтаљйонсем тата предприйатисемпе учреждениссенче хаçат-журнал саракансем илеççĕ.

Ийуљ уйăхĕшĕн подпискăна çак ийуљ уйăхĕн 18-мĕш кунĕччен илеççĕ.

Сойузпичет.

2—2

„Чăваш Коммунĕпе" „Красная Чувашия"-хаçатсен издателствинче ĕçлеме

КАССИР КИРЛĔ

ПЫМАЛЛА: Шупашкар хули, Володарский урамĕ, Пичет çуртĕ, III-мĕш хутлăх, 18-мĕш пӳлĕм.

Шупашкарти „Пекарь" артелне

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ

аслă бухгалтĕр—бухгалтĕрсем

КИРЛĔ

Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

2—2

1938 çулхи ийулĕн 9,10,11,12-мĕшĕсенче

ТАШĂ-балет гастролĕсем

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕ

Мускаври Айседорă Дункан йачĕпе тăракан студи солистисем килеççĕ

Концертсенчи вырăнсене кун каçипех 1—71 номерлĕ телефон тăрăх, филармонира, Герцен урамĕ, 9,—илеççĕ. Кăнтăрла иртсен 3 сехетрен 1—26 номерлĕ телефон тăрăх—Академи театрĕнче илеççĕ.

Гастрољсем кăçхине 9 сехетре пуçланаççĕ.

Гор. Чебоксары, Типографи № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 881.